

5579
54-89

ЯЛХУҪАЛАХĔНЧЕ МАЛТА
ПЫРАКАНСЕН ОПЫЧĔПЕ
ПАЛЛАШТАРАКАН
КĔНЕКЕСЕН БИБЛИОТЕКИ



Е. А. Андреев, М. О. Осипов

СЫСНА ĔРЧЕТЕКЕН ЧИ ЛАЙĂХ ФЕРМА



ЧĂВАШГОСИЗДАТ
Шупашкар — 1954

Ялхуçалăхĕнче малта пыракансен опычĕпе паллаштаракан кĕнекесен библиотеки

Е. А. АНДРЕЕВПА М. О. ОСИПОВ

СЫСНА ЁРЧЕТЕКЕН ЧИ ЛАЙĂХ ФЕРМА

ЧУВАШСКАЯ
КНИЖНАЯ ПАЛАТА
Чувашской АССР

Чăваш АССР
Государство Издательстви
Шупашкар — 1954

Чувашский Книжный Фонд
Чувашской Книжной Палаты
26 мая 1954 г.
№ 130

ТУПМАЛЛИ

Малтан калани 3
Обществăлла хуçалăх—колхоз пуянлăхĕн çăлкуçĕ 7
Тăван çĕршыв хушнă пек 11
Заданисене пурнăçласси—чи хаклă тивĕç 15
Выльăх-чĕрлĕх ăшă витесенче 18
Чи ответлă тапхăр 22
Кашни сысна аминчен 25-шер çура 26
853 сысна самăртнă 30
Ферма пысăк тупăш парать 34
Ырă тĕллев 37
Колхозăн перспективлă планĕ 39

Редактор *В. Алендеев.* Тех. ред. *Ил. Петров.*
Корректор *И. Остроумов.*

НТ 01493. Подписано к печати 13/IV-1954 г. Объем 2,05 п. л. уч.-изд. л. 1,74. Бумага 84×108 1/32. Тираж 2.000 экз. Заказ № 550. Цена 45 коп.

Типография № 1 Министерства культуры Чувашской АССР. *г. Чебоксары, ул. Володарского, 5.*

МАЛТАН КАЛАНИ

Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕн Центральнăй Комитечĕн 1953 çулхи сентябрь уйăхĕнче пулса иртнĕ Пленумĕ КПСС Центральнăй Комитечĕн пĕрремĕш секретарĕ Н. С. Хрущев юлташ доклачĕ тăрăх „ССР Союзĕн ялхуçалăхне малалла аталантармалли мерăсем çинчен“ постановлени йышăнчĕ. Çак постановленире ялхуçалăхĕн мĕнпур отраслĕсене малалла вăйлăн аталантарса пымалли, ялхуçалăх продукчĕсем туса хатĕрлессине татăклăнах ӳстермелли майсене кăтартса панă.

КПСС Центральнăй Комитечĕн Пленумĕ колхозсемпе совхозсенче обществăлла выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçе хăвăрт вăйлатма кирлине уйрăмах хытă асăрхаттарчĕ. „Выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçе,—тенĕ Пленум решенийĕнче,—чи малтан, обществăлла выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçе хăвăрт вăйлатасси çĕршыв пурнăçĕнче чи пысăк пĕлтерĕшлĕ ĕç пулса тăрать, халĕ вăл ялхуçалăхĕ енĕпе партипе правительствăн вăраха ямасăр татса памалли задачи пулса тăрать“.

КПСС Центральнăй Комитечĕн Пленумĕ йышăннă постановленипе пĕтĕмĕшпех килĕштерсе, ССР Союзĕн Министрĕсен Совечĕпе КПСС Центральнăй Комитечĕ „Çĕршывра выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçе малалла аталантармалли мерăсем çинчен тата колхозниксен, рабочисемпе служащисен хуçалăхĕсем государствăна обязательнăй йĕркепе выльăх-чĕрлĕх продукчĕсем памалли нормăсене чакарасси çинчен“ постановлени йышăнчĕç. Çак постановленире выльăхсен шутне ӳстермелли тата вĕсен тухăçлăхне хăпартмалли заданисене çирĕплетнипе пĕр вăхăтрах, выльăх-чĕрлĕх продукчĕсем хатĕрлес ĕçе

лайăхлатмалли, выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçре колхозсемпе колхозниксен интересĕсене çĕклемелли, выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçĕн материалла-техникăлла никĕсне çирĕплетмелли мерăсене те тĕплĕн кăтартса панă.

Халăхăн аш-какай, сĕт-çу нумай пултăр, халăх валли куллен кирлĕ япаласем тăвакан промышленноçăн чĕртавар çителĕклĕ пултăр,—çакăнпăн тăрăшаççĕ пирĕн партипе правительство.

Çĕршывра выльăх-чĕрлĕх продукчĕсем ытлăн-çитлĕн туса хатĕрлес ĕçре сыснасем ĕрчетесси питех те пысăк вырăн йышăнса тăрать. Сыснасем, ытти выльăх-чĕрлĕхпе танлаштарсан, хăвăртрах ĕрчеççĕ, хăвăртрах ӳссе çитĕнеççĕ, вĕсем чи йӳнĕ те тĕрлĕрен апатсемпе, кĕтӳ çӳретмелли вырăнсемпе те лайăх усă курма пултараççĕ.

Партипе правительство заданийĕсене ăнăçлă пурнăçласа пырса, çĕршыври колхозсемпе совхозсем вăрçă хыççăнхи çулсенче выльăх-чĕрлĕх шутне, вăл шутрах сыснасен йышне чылай ӳстерчĕç. 1945 çулхи июль уйăхĕнчен пуçласа 1953 çулхи июль уйăхне çитиччен ССР Союзĕнче сыснасен хисепĕ 25,1 миллион пуç ӳснĕ. Çак вăхăт хушшинче пирĕн республикăри колхозсенче сыснасен шучĕ 139,5 процент ӳснĕ.

Çитĕнӳсем пирĕн татах та пысăкрах пулмалла. Умра пысăк та ответлă задачăсем тăраççĕ. Пиллĕкмĕш пилĕк-çуллăхра çĕршыври колхозсенче сыснасен йышне 85—90 процент ӳстермелле. 1954 çулхи октябрĕн 1-мĕшĕ тĕлне вара сыснасен шутне çак хисепе çитермелле: пĕтĕм ялхуçалăхĕ енĕпе 34,5 миллион пуç, вăл шутра колхозсенче 21,6 миллион пуç пулмалла. Сыснасен йышне ӳстернипе пĕр вăхăтрах вĕсен тухăçлăхне хăпартас тĕлĕшпе те чылай ĕçлемелле. Пиллĕкмĕш пилĕкçуллăхра аш-какайпа сало туса илессине 80—90 процент ӳстермелле.

Н. С. Хрущев юлташ КПСС Центральнăй Комитечĕн Пленумĕнче тунă докладĕнче çапла каланă: „Халăха кирлĕ чухлĕ аш-какайпа аш-какай продукчĕсем парса тăрас тесен, мĕнпур сухалакан çĕрсен, çарансен, кĕтӳ çӳретмелли вырăнсен кашни 100 гектарĕ пуçне 27 центнер аш-какай туса илмелле. Çакна тума сысна ĕрчетес ĕçе вăйлăн аталантарса, сухалакан çĕрсен кашни 100 гектарĕ пуçне 30 центнертан кая мар сысна ашĕ туса илмелле“... „Сыснасене лайăх апатпа самăртассине анлăн сарса, сыснасенчен тупăш ытларах илесси

çине тимлĕн пăхни кирлĕ, мĕншĕн тесен çĕршывра аш-какай туса хатĕрлес ĕçре сыснасенчен илекен продукци тивĕçлĕ вырăн йышăнман-ха".

Пирĕн çĕршывра сыснасем ĕрчетес ĕçе лайăх йĕркеленĕ фермăсем нумай, кун пек фермăсенче выльăх-чĕрлĕхрен илекен тупăш та пысăк. Акă Вологда облаçĕнчи „Буденновец" колхозри сысна фермин паха çитĕнĕвĕсене илер. Кунта ферма заведующийĕ пулса СССР Верховнăй Совечĕн депутачĕ, Социализмла Ĕç Геройĕ, Сталинла преми лауреачĕ Алексăндра Евгеньевна Люскова ĕçлет. Фермăра çулсеренех кашни сысна аминчен 29—32 çура илсе ӳстереççĕ. Самăртнă чухне сыснасем талăкра кашниех пĕр килограмм ытла хушăнаççĕ. Лайăх самăртнă сыснасем вара 350 килограмм таран таяççĕ. Çулталăк хушшинче кашни сысна аминчен вунă пин тенкĕ ытла тупăш илеççĕ. „Июнька" ятлă сысна аминчен пĕр çулта 35 пин тенкĕ таран тупăш илнĕ.

Чернигов облаçĕнчи Чернигов районĕнчи „Новый шлях", „Всесвітній Жовтень" колхозсенче, Полтава тата Мускав облаçĕсенчи чылай колхозсенче кашни 100 гектар çĕр пуçне чĕрĕ виçепе 2—4-шар тонна сысна ашĕ илеççĕ.

Сысна ĕрчетес енĕпе паха çитĕнӳсем тунă колхозсем пирĕн республикăра та сахал мар. Муркаш районĕнчи Сталин ячĕпе тăракан, Улатăр районĕнчи „Победа", Октябрьски районĕнчи „Звезда", Етĕрне районĕнчи Буденный ячĕпе тăракан, Чкаловски районĕнчи „Восток", Советски районĕнчи Карл Маркс ячĕпе тăракан, Ишлей районĕнчи „За коммунизм", Çĕрпӳ районĕнчи Хрущев ячĕпе тăракан, Элĕк районĕнчи „Правда", Çĕмĕрле районĕнчи Ленин ячĕпе тăракан тата ытти чылай колхозсенчи ферма работникĕсем çулталăкра кашни сысна аминчен 20—25-шер çура илсе ӳстереççĕ. Сыснасене хупса самăртас ĕçе аван йĕркеленĕ. Çавна май фермăсенчен илекен таварлă продукципе тупăша çултан-çул ӳстерсе пыраççĕ.

Выльăх-чĕрлĕх ĕрчетессине малалла аталантарасси— пĕтĕм халăх ĕçĕ. Ана пурнăçлассишĕн мĕнпур колхозниксен хастарлă кĕрешмелле. Çĕршывра аш-какай туса хатĕрлессине ӳстерес тесе, колхоз фермисенче сыснасене пăхса усрассине лайăхлатмалла. Лайăх ĕçлес тесен, фермăри кашни работникĕн хăйне хушнă ĕçе чунтан-чĕререн юратса тумалла, зоотехникăна тата малта

пыракан фермăсен опытне вĕренсе пымалла. Малта пыракансен опычĕпе паллашнипе пĕрлех вăл меслетсемпе кашни фермăра анлăн усă курмалла.

КПСС Центральнăй Комитечĕн 1954 çулхи февральпе март уйăхĕсенче пулса иртнĕ пленумĕ çĕршывра тĕштырă туса илессине малалла ӳстересси çинчен тата сухаламасăр выртнă çĕрсемпе усă курасси çинчен постановлени йышăнчĕ. Çав постановлението выльăх-чĕрлĕх валли апат хатĕрлес ĕçе лайăхлатмалли мерăсем çинчен те тĕплĕн кăтартса панă. Çав мерăсене пурнăçлани колхозсенче сысна ĕрчетес ĕçе вăйлатма пысăк пулăшу парать.

Çак кĕнекере эпир Муркаш районĕнчи Сталин ячĕпе тăракан колхозри сысна ĕрчетес ĕç ăстисен паха опычĕпе паллаштарасшăн.

ОБЩЕСТВĂЛЛА ХУÇАЛĂХ—КОЛХОЗ ПУЯНЛĂХĔН ÇĂЛКУÇĔ

Муркаш район центрĕнчи Сталин ячĕпе тăракан колхоз тырпул акса тăвас, обществăлла выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес тĕлĕшпе районта мала тухрĕ. Колхоз çĕнĕ çурт-йĕрсемпе пуянлансах пырать. 1952 çулта кăна обществăлла çуртсем 17 туса лартнă. 1953 çулта выльăх-чĕрлĕх фермисенче 9 çурт-йĕр тунă. Колхозăн хăйĕн электростанци пур, ытти машинăсем те нумай. Колхоза машина-трактор станцийĕ пысăк пулăшу парать. Пĕтĕм уй-хир ĕçĕсен 90 процентне яхăн МТС машинисемпе тăваççĕ. Колхозниксем пуян та культурăллă пурăнаççĕ. Вĕсен киленче электричество çути йăлкăшать, радио каласать. Халĕ кунта ĕлĕкхи асаплă пурнăç асра та çук.

Уй-хир ĕçĕ. Колхоз çуллен 1050 гектар тырă акать. Ыраш, тулă, пăрçа, сĕлĕ—колхоз акакан тĕп культурăсем. Çĕрĕç культури пĕрмаях лайăхланать, МТС колхоза паракан пулăшу çулсеренех вăйланса пынине пула, тырпул тухăçлăхĕ çулсеренех ӳсет. 1952 çулта кашни гектартан вăтам шутпа 11,3 центнер тĕштырă туса илнĕ пулсан, 1953 çулта гектартан вăтам шутпа 16,4 центнер туса илнĕ. Уйрăм культурăсен тухăçлăхĕ чылай пысăкрах.

Колхозниксем çĕрĕн пур лаптăкĕ çинче те вăйлă тырпул туса илме тăрăшаççĕ. Çавна май колхоз хăйĕн уйхирĕнче тĕрĕс пусă çаврăнăшне куçса пырать. Çакă вăл пĕр харăсах икĕ тĕп задачăна татса парать. Пĕр енчен, пĕтĕм ялхуçалăх культурисен тухăçлăхне хăпартма пулăшать. Тепĕр енчен, выльăх-чĕрлĕх валли апат ытларах пулать. Çавăнпа колхозниксем хăйсен умне çакăн пек задача лартнă: 1954 çулта колхозри

пусă çаврăнăшне пĕтĕмĕшпех йĕркелесе çитермелле. Çавăнпа пĕрлех колхоз хире выränти тата минерал̆лă удобренисем ытларах кăларма пуçларĕ.

Тырпул тухăçлăхне ӳстересси çĕре вăхăтра сухаласа акнинчен, тырпула лайăх пăхса ӳстернинчен, ăна кĕске срокра та пĕр тăккаламасăр пухса кĕртнинчен нумай килет. Колхозри уй-хир ĕçченĕсем ирхи тата кĕрхи çĕртме сухине яланах вăхăтра, агротехника кăтартнă пек туса хăвараççĕ. Юлашки çулсенче тырăсене хĕреслĕ майпа ытларах акаççĕ. Тырпулсене вăхăтра çумкурăксенчен тасатса тăраççĕ, вĕсене пухса кĕртес ĕçе лайăх йĕркелеççĕ.

Колхозра çĕрулми лартса тăвас ĕç культури те ӳссех пырать. Çавна май колхоз уй-хирĕсенче çĕрулми лайăх çитĕнет. 1953 çулта ăна гектартан вăтам шутпа 167 центнер туса илнĕ, обществăлла выльăх-чĕрлĕх валли 1 000 тонна çĕрулми уйăрса панă.

1952 çулта колхоз—30 гектар, 1953 çулта 40 гектар кантăр акнă. Ăна агротехника кăтартнă сроксенче акса хăварни, лайăх пăхса çитĕнтерни тата вăхăтра пухса илни 1953 çулта пысăк тупăш кӳнĕ. Кашни гектартан вăтам шутпа 5,1 центнер вăрă тата 4,8 центнер сӳс тухнă. Кантăр продукцине государствăна парса 255 пин тенкĕ тупăш илнĕ.

Выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕç. Ялхуçалăх культурисен тухăçлăхне ӳстернипе пĕрлех, колхозниксем обществăлла выльăх-чĕрлĕх йышĕпе тухăçлăхне те ӳстерсе пыраççĕ. Йышлă та пысăк тухăçлă выльăх-чĕрлĕхшĕн чăн-чăн кĕрешӳ ялхуçалăх артелĕ пилĕк колхозпа пĕрлешсе пысăкланнă хыççăн пуçланнă. Мĕншĕн тесен, шултра хуçалăхра обществăлла выльăх-чĕрлĕх валли кĕске вăхăтрах çĕнĕ витесем туса лартма, выльăх апачĕн никĕсне çирĕплетсе пыма тата зоотехникăпа ветеринари кăтартăвĕсене лайăхрах пурнăçлама пысăк майсем тухса тăнă.

Ку вăл 1951 çул пуçламăшĕнче пулнă. Унтанпа нумаях та вăхăт иртмерĕ, анчах та колхоз фермисенче пысăк улшăнусем пулнине куратăн. 1951—1953 çулсем хушшинче ферма работникĕсем 250 пăру, 511 путек, 2346 сысна çури, конюхсем 107 тиха пăхса ӳстернĕ. Пĕр çамрăк выльăх та чирлемен, вилмен. Фермăсенче ама выльăхсем хĕсĕр юлассине те пĕтернĕ.

Çамрăк выльăхсене тĕрĕс-тĕкел упраса хăварни

колхоза выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли виçĕ çуллăх плана та, 1952 çулхи плана та ирттерсе тултарма май пани. Халĕ колхозри фермăсенче тĕрлĕ выльăхсем 1 650 пуç, кайăк-кĕшĕк икĕ пин ытла. Ку вăл 1953 çулхи планпа пăхнинчен чылай нумайрах.

Колхоз фермисенче выльăх-чĕрлĕх тухăçлăхĕ те çултан-çул ӳссе пырать. 1951 çулта кашни ĕнерен 1190 литр сĕт суса илнĕ пулсан, 1952 çулта—1475 литр, 1953 çулта вара тăхăр уйăх хушшинче—1359 литр илнĕ. 1951 çулта пурĕ—54738 литр, 1952 çулта—94421 литр, 1953 çулта вара тăхăр уйăх хушшинче 102907 литр сĕт суса илнĕ. Икĕ хута яхăн ытларах!

Колхозниксем выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçе хăвăрттăн аталантарассишĕн укçа-тенке те, строительство материалĕсене те хĕрхенсе тăмаççĕ. Çав тăкаксем халĕ колхоза каялла ытлашшипех таврăнаççĕ. 1951 çулта фермăсенчен илнĕ тупăш 147140 тенкĕ пулнă. 1952 çулта 397 817 тенкĕ тупăш илнĕ, урăхла каласан, артелĕн пĕтĕм тупăшĕнчен çуррине ытла фермăсем пани. 1953 çулта вара тăхăр уйăх хушшинче выльăх-чĕрлĕхрен 477 390 тенкĕ тупăш илнĕ.

1951 çулта колхоз фермисенчен уй-хире 6 850 тонна тислĕк кăларнă, 1952 çулта—9 233 тонна, 1953 çулта—11 970 тонна кăларнă. Çапла ĕнтĕ, вăйлă тырпул туса илни выльăх-чĕрлĕх йышлă ĕрчетме, фермăсене пысăклатни тухăçлă тырпул туса илме пулăшать.

Колхоз государствăна выльăх-чĕрлĕх продукчĕсем памалли плана çулсеренех ăнăçлăн тултарать. Ку анчах мар. Колхоз государствăна планран ирттерсе ялхуçалăх продукчĕсем нумай парать. 1952 çулта 36 пин литр сĕт, 362 килограмм çу, 187 центнер сысна ашĕ пани. Çавсемшĕн артель автомашина, автоприцеп туяннă тата 45 тонна турантă илнĕ. 1953 çулта планран ирттерсе 79 пин литр сĕт, 337 центнер аш-какай тата 328 килограмм çăм панăшăн икĕ грузовик тата çăмăл автомашина туяннă, 60 тонна ытла турантăпа сăсăл илнĕ. Халĕ ĕнтĕ колхозăн ултă автомашина.

... Малтанхи вăхăтра колхоз сысна ĕрчетес тĕлĕшпе çителĕксĕр ĕçленĕ. Ферма кĕтĕвĕ пĕчĕккĕ пулнă. Ферма тухăç та, тупăш та сахал пани. Юлашки çулсенче колхоз сысна ĕрчетес ĕç çине тимлĕн пăхма пуçларĕ, фермăри сыснасен йышне ӳстерессишĕн, сысна ашĕ, çăвĕ ытларах туса хатĕрлессишĕн мĕнпур вăя хурса ĕçлеме

тытăнчĕ. Тăрăшса ĕçленин паха результачĕсем куç умĕнчех.

Фермăра сыснасен йышĕ çултан-çул ӳссе пыни çак таблицăран аван курăнать. Сыснасен йышĕ январĕн пĕрремĕш тĕлне çакăн чухлĕ пулнă:

1951 çул—289 пуç,
1952 çул—415 пуç,
1953 çулхи октябрĕн 1-мĕшĕ тĕлне—436 пуç.

Фермăра сыснасен пахалăхне лайăхлатас ĕçе те лайăх организациленĕ. Сысна амисем пурĕ 65 пуç шутланаççĕ. Вĕсем тата аçа-производительсем те пурте шултра ăратлă. Халĕ çитĕннĕ чылай сыснасем кашни 200 килограмм ытла таяççĕ. Фермăра ĕçлекенсем сыснасен ăратлăхне лайăхлатас ĕçе малалла та туса пыраççĕ Вĕсем çамрăк сысна çурисенчен ӳт-пӳ, сывлăх тата пахалăх тĕлĕшĕнчен чи лайăххисене суйласа илеççĕ. Малалла вара суйласа илнĕ çамрăк çурасене тĕрĕс ӳстерсе, хăйсен ашшĕ-амăшĕсенчен лайăхрах йăх тăвассишĕн ывăнма пĕлмесĕр тăрăшаççĕ.

Сысна ĕрчетес ĕçре аш тата сало туса илесси пысăк вырăн йышăнать. Колхозра çак задачăна та чыслăн пурнăçа кĕртеççĕ. Юлашки çулсенче артель 853 пуç сысна самăртнă, кашни çул вуншар тонна сысна ашĕ тата сало илнĕ. Продукцие государствăна панă, Горький тата Шупашкар хулисенчи пасарсенче чылай сутнă.

Сысна ферми государствăна та, колхоза та пысăк усă парать. Сăмахран, 1952 çулта колхоз ку фермăран 260 396 тенкĕ тупăш илнĕ. Ку вăл артелĕн пĕтĕм тупăшĕнчен 39 процент, выльăх-чĕрлĕхрен илнĕ тупăшран 65 процент пулать.

* * *

Сталин ячĕпе тăракан колхоз членĕсем КПСС Центральнăй Комигечĕн сентябрьти Пленумĕ йышăннă решение, çавăн пекех колхозсемпе совхозсен чи кирлĕ отраслĕсене аталантарас тĕлĕшпе партипе правительство йышăннă постановленисене чун-чĕререн ырласа, пысăк савăнăçпа кĕтсе илчĕç. Вĕсем обществăлла хуçалăха пур енĕпе те аталантарассишĕн хăйсен вăйне хĕрхенмесĕр тăрăшаççĕ.

— Фермăсене пысăк тупăш паракан тăватпăр, çитес икĕ-виçĕ çул хушшинче выльăх-чĕрлĕхрен илекен тупăша миллион тенкĕрен ирттеретпĕр,—теççĕ колхоз ĕçченĕсем. Çак ĕçре колхозниксене ялти коммунистсемпе комсомолецсем хавхалантарса пыраççĕ.

Вĕсем партипе правительство решенийĕсене çийĕнчех тата тĕплĕн ăнлантарса параççĕ. Умра тăракан тĕллеве пĕлсе тăракан кашни колхозник хăйне хушнă ĕçе лайăх, ăнланса тума тăрăшать. КПСС Центральнăй Комитечĕн пленумĕсен постановленийĕсене сӳтсе явнă хыççăн колхозниксен ĕçри хастарлăхĕ татах ӳсрĕ. Колхозра ĕç дисциплини те нихçанхинчен ытларах аванланчĕ.

ТĂВАН ÇĔРШЫВ ХУШНĂ ПЕК

1953 çул пуçламăшĕнче Шупашкарта выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçре малта пыракансен республикăри канашлăвĕ пулса иртрĕ. Канашлăва хутшăннисем Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕн XIX-мĕш съезчĕ çĕршыври выльăх-чĕрлĕх ĕрчетекенсем умне кăларса тăратнă задачăсене сӳтсе яврĕç тата пĕр-пĕрин опычĕпе паллашрĕç. Çав канашлура колхоз председателĕсемпе ялхуçалăх специалисчĕсем те пулчĕç, сăмах тухса каларĕç.

— Колхозсем пĕрлешиччен,—терĕ Муркаш районĕнчи Сталин ячĕпе тăракан колхоз председателĕ Евтихий Андреевич Андреев,—обществăлла выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕç кая юлса пыракан отрасль пулнă. Фермăна çирĕплетес ĕçе йĕркелеме эпир выльăх-чĕрлĕх пăхакан бригадăран: доярксенчен, сысна, кайăк-кĕшĕк пăхакансенчен тата фермăри ытти работниксенчен пуçларăмăр. Фермăсене ертсе пыма опытлă колхозниксене уйăртăмăр: Петр Павлович Оньков коммуниста ĕне ферминче ĕçлеме çирĕплетрĕмĕр, Иван Семенович Огурцов коммуниста сысна фермин заведующийĕ турăмăр. Хальхи вăхăтра пирĕн колхоз фермисенче 4 коммунист тата 28 комсомолец ĕçлеççĕ. Вĕсем, стахановла ĕçлесе, ытти работниксене ĕçре хавхалантараççĕ".

Колхоз правленийĕпе пуçламăш парторганизаци фермăсенче ĕçлекен кадрсемшĕн куллен тăрăшнипе колхозра пысăк тухăçлă обществăлла выльăх-чĕрлĕх ĕрчетекен мастерсем ӳссе çитĕнчĕç, вĕсем хăйсен пархатарлă ĕçĕпе колхозăн обществăлла пурлăхне ӳстерсе пыраççĕ.

Сысна ферминче пурĕ 13 çын ĕçлет. Пурте вĕсем—хастарлă колхозниксем. Акă свинарка Елена Гавриловна Гаврилова. Вунпилĕк çул ытла ĕçлет вăл фермăра. Унпа ĕç е пурнăç çинчен калаçма тытăнсан, вăл колхоз ĕçĕшĕн чĕререн тăрăшнине, хăйĕн ĕçне юратнине куратăн. Вунпилĕк çул хушшинче сысна ĕрчетес ĕç ăсти колхоза икĕ пин те пилĕкçĕр ытла çура ӳстерсе панă. Ахальтен мар Елена Гавриловна ятне колхозниксем яланах ырă сăмахпа асăнаççĕ. Вăл—Муркаш район Совечĕн депутачĕ.

Елена Гавриловăпа пĕрле ĕçлекен Варвара Андреева, Зинаида Федорова, Татьяна Сергеева тата Зоя Казакова колхозницăсем те паха тĕслĕхсем кăтартаççĕ. Çавăнпăн колхозниксем вĕсен ячĕсене те яланах ырă сăмахпа асăнаççĕ. Ĕçре ялан хастар хĕрсем, фермăра темиçешер çул ĕçлесе, сыснасене пăхса усрама, çурасене çитĕнтерме лайăх вĕренсе çитнĕ. Вĕсем хăйсен обязанноçĕсене, зоотехникăпа ветеринари правилисене çирĕппĕн пурнăçа кĕртсе пыраççĕ. Вĕсен кашнин ĕçĕнче хăйне майлă ӳсĕмсем палăраççĕ. Варвара Андреева—районти Халăх сучĕн халăх заседателĕ. Зинаида Федорова—Муркаш ял Совечĕн депутачĕ. Татьяна Сергеева колхозницăн пурнăçĕ те выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçпе таччăн çыхăнса тăрать. Вăл тăватă çул хушши доярка пулса ĕçленĕ, икĕ çул ытларах кайăк-кĕшĕк пăхнă, унтан сысна ферминче ĕçлеме пуçланă.

Пĕр-пĕр ĕçре вăрахчен ĕçлени, çав ĕçе лайăх хăнăхни тухăçлăха ӳстерме пулăшать. Çавăнпа та колхоз ферминче сыснасене пăхакан хĕрсем пурте: „юрататпăр хамăр ĕçе“, теççĕ. Вĕсем ĕçлеççĕ, вĕренеççĕ, хăйсен ăсталăхне ӳстерсе пыраççĕ, мухтава тухаççĕ. Чăваш АССР Министрĕсен Совечĕпе КПСС обкомĕ республикăри выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес тĕлĕшпе ĕçлекен социализмла ăмăртăвăн 1953 çулхи итогĕсене пăхса тухса, колхоз фермисенче сысна пăхакан 115 çынна „Республикăри чи лайăх свиновод“ ятне панă. Çав хисеплĕ ята илме тивĕçлĕ пулнисем хушшинче Елена Гаврилова, Варвара Андреева тата Зинаида Федорова юлташсем те пур.

Фермăра икĕ уйăхран иртнĕ сысна çурисене пăхса ӳстерес тата сыснасене хупса самăртас тĕлĕшпе тепĕр бригада ĕçлет. Кунта Клеопатра Музыкова, Анфиса Огурцова, Алиса Смирнова, Ольга Атласкина, Анна Трофимова тата Александра Голубева хĕрсем ырми-канми

ĕçлеççĕ. Бригадăна 59 çулхи Денис Захарович Смирнов колхозник ертсе пырать. Вăл фермăра нумай çул хушши ĕçлесе пуян опыт пухнă. „Эсĕ мĕнле меслетсемпе ĕçлетĕн“ тесе ыйтсан, вăл яланах çапла ответ парать:

— Сыснасене самăртасси, урăхла каласан, çĕрулмирен сало тăвасси—кăткăс та йывăр ĕç. Тӳрех калатăп, пирĕн ĕçре нимĕнле секрет та çук, колхоз чысĕшĕн ырми-канми тăрăшни çеç кирлĕ... Ир те, каç та эпир фермăра, сыснасем патĕнче. Кашни сыснана кирлĕ пек пăхасчĕ тетпĕр, зоотехника хушнă пек ĕçлетпĕр.

Денис Захаровича хăйсен колхоз членĕсем çеç мар, районти ялсенчи çынсем те лайăх пĕлеççĕ, хисеплеççĕ, мухтаççĕ. Мĕншĕн тесен, вăл фермăра ĕçлекенсене лайăх пулăшса пырса, сысна ашĕ тата сало туса хатĕр лес тĕлĕшпе фермăна районта малти вырăна кăларчĕ.

— Республикăра та малти вырăна тухасчĕ,—тет вăл.

Хăйсене шанса панă ĕçе чĕререн юратса туса пыракан, пуçарулла та пултарулла ферма заведующийĕсем çинчен те пĕр-икĕ сăмах каласа хăвармалла. Сысна ĕрчетес ĕçе колхозра Иван Семенович Огурцов коммунист ертсе пырать. Вăл фронтран таврăнсанах, 1946 çулта, „Знамя труда“ колхозри фермăсен заведующийĕ пулса ĕçлеме тытăннă, халĕ пысăк колхозра, пысăк фермăна аталантарассишĕн пĕтĕм вăйне хурать.

Иван Огурцов—ăста организатор. Вăл фермăра чи малтанах выльăх-чĕрлĕх пăхакан колхозниксемпе ĕçлеме тытăннă. Вĕсене малта пыракан колхозсенче мĕнле ĕçленипе паллаштарнă, ĕç çине тӳрĕ кăмăлпа пăхма, ĕçе тирпейлĕ тума вĕрентнĕ. Ахальтен мар ферма работникĕсем хушшинче ĕç дисциплини çирĕп, ĕçрен пăрăнас йăла çук.

И. С. Огурцов — Муркаш ял Совечĕн депутачĕ, колхоз правленийĕн членĕ. Халăх шанăçне тӳрре кăларассишĕн куллен тăрăшать вăл. Артельте час-часах ун çинчен ырă кăмăлпа çапла калаççĕ:

— Пирĕн Иван Семенович сысна ĕрчетес ĕçе ăста пĕлет, вăл тăрăшнипе ферма ӳссе пырать, колхоза пысăк усă кӳрет,—теççĕ.

Ĕне фермин заведующийĕ Петр Павлович Оньков пирки те çавнах каламалла. Вăл—КПСС членĕ, Муркаш ял Совечĕн депутачĕ, ветеринари фельдшерĕ, фронтра пулнă, çиччĕмĕш çул ĕнтĕ фермăра пĕр улшăнмасăр

ĕçлет. Петр Павлович колхоз фермисенче выльăх-чĕрлĕхе тĕрлĕ чир-чĕр ересрен сыхлас ĕçе аван йĕркеленĕ. Свинаркăсене вăл сыснасене чир-чĕртен сыхласси тата çамрăк çурасене шăнса пăсăласран упрасси çинчен сахал мар вĕрентнĕ.

Хуть те епле ĕçе те ăнăçлă тăвас тесен, ăна чĕререн юратни, ыранхи кун паянхинчен лайăхрах ĕçлеме тăрăшни, куллен вĕренсе пыни кирлĕ. Колхозăн сысна ферминче ĕçлекенсем çапла тăваççĕ те ĕнтĕ. Хăйсен ĕçĕнчи опытсăр пуçне, вĕсем ытти çĕрти опытсемпе те усă кураççĕ. Хаçат-журналсем вĕсен яланах ал айĕнче, унти кашни статьянах пĕрле пухăнса вулаççĕ, сӳтсе яваççĕ, кашни çĕнĕ шухăшах шута илеççĕ. Сысна ĕрчетесси çинчен çырнă кĕнекесем те нумай вĕсен. Колхоз правленийĕ, ĕçре кирлĕ кĕнекесемсĕр пуçне, илемлĕ литература кĕнекисем те илсе панă.

Выльăх пăхакансем валли ферма çумĕнче уйрăм пӳрт пур. Кунта ферма работникĕсен кун йĕрки тата обязанноçĕсем çинчен çырнă хутсем çакăнса тăраççĕ. Çавăн пекех социализмла обязательствăсене мĕнле пурнăçласа пынине те тăтăшах кăтартса пыраççĕ. Çапла туни колхозниксен ĕçри туйăмне çӳлĕ пусăма çĕклет.

Колхозра зоотехникăна вĕренмелли виçĕ çуллăх курссем ĕçлеççĕ. 1952—1953 вĕренӳ çулĕнче сысна ферминче ĕçлекенсем пурте „5“ паллăпа вĕренсе тухнă. 1954 çулхи çуркунне вĕсем курсран вĕренсе тухаççĕ. Вĕренсе тухсан, вĕсене пĕрремĕш разрядри ялхуçалăх мастерĕн аттестатне параççĕ.

Çапла ĕнтĕ, сысна ĕрчетес ĕç ăстисем, ытти фермăсенче ĕçлекенсем пекех, зоотехника науки çитĕнĕвĕсене хăвăрт йышăнса илеççĕ. Пĕр-пĕринпе ăмăртса ĕçлесси, колхоз умĕнче тăракан задачăсене пурнăçа кĕртесси çинчен пухăнса канашласси, малта пыракансен опычĕсене вĕренесси—çаксем пурте вĕсен кулленхи ĕç йăлине кĕнĕ. Калаçусемпе лекцисем, стена хаçачĕпе боевой листоксем—пурте кунта хăйсен выраннĕнче. Фермăсенче агитаторсем кулленех ĕçлеççĕ. Колхозри парторганизаци секретарĕ З. М. Магаев юлташ ферма работникĕсен ыйтăвĕсемпе сĕнĕвĕсене яланах тивĕçтерсе пырать.

Çак юлашки çулсенче кăна колхоз сысна ферминчен 700 пин тенкĕ ытла тупăш илнĕ. Çакă вăл хăй тĕллĕн пулман, тирпейлĕ алăпа тенкĕшерĕн пухнă укçа

вăл. Пысăк тупăшăн иксĕлми çăлкуçĕ — колхозниксем наука вĕрентнĕ пек ĕçлеме пĕлнинче. Çакăн çинчен пĕррехинче фермăра сăмах хускалчĕ. Д. З. Смирнов бригадир, чылайччен итлесе ларнă хыççăн, çапла каларĕ:

— Ман шутпа колхоз тĕреклĕ пуласси çутçанталăкран мар, пĕтĕмпех хамăртан килет. Пирĕн халĕ пурин те пĕр шухăш: Тăван çĕршыв хушнă пек ĕçлесси.

Хастарлă колхозниксем КПСС Центральнăй Комитечĕн сентябрьти тата 1954 çулхи февральпе март уйăхĕсенче пулса иртнĕ пленумĕсем кăтартса панă задачăсене ăнăçлăн пурнăçлассишĕн çине тăрсах кĕрешеççĕ. Вĕсем Тăван çĕршыв хушнă пек ĕçлеме тăрăшаççĕ.

ЗАДАНИСЕНЕ ПУРНĂÇЛАССИ — ЧИ ХАКЛĂ ТИВĔÇ

Ялхуçалăх артелĕн Уставĕнче çапла каланă: „Выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕç бригадисене виçĕ çултан кая мар вăхăта уйăрса хураççĕ“, тенĕ. Выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçе тăрăшса туса пыракан Сталин ячĕпе тăракан колхозра çапла тунă та ĕнтĕ: фермăсенче яланлăх выльăх-чĕрлĕх бригадисем организациленĕ, кадрсене час-часах улăштарса тăрас юрăхсăр йĕркене пĕтернĕ.

Колхозăн сысна ферминче икĕ бригада ĕçлет. Кунта пĕтĕм ĕçе сдельщина тăрăх организациленĕ. Хуçасăрлăх ан пултăр тесе, кашни бригадăна продукт паракан выльăх-чĕрлĕх — сыснасем, кирлĕ ĕç хатĕрĕ, туртăм вăйĕ тата карта-витесем çирĕплетсе панă, бригадăра вара выльăх-чĕрлĕхе тата инвентарьсене уйрăм колхозниксем çумне çирĕплетнĕ. Кашни свинарка çумне 10—12 сысна амипе вĕсен çурисене çирĕплетсе панă. Сысна çурисене вĕсем аслăрах сысна çурисен ушкăнĕсене куçариччен е сутиччен пăхса усраççĕ. Амăшĕнчен уйăрнă сысна çурисемпе самăртма хупнă сыснасене иккĕмĕш бригадăри çынсем пăхаççĕ, вĕсене кашнине 40—50 пуç сысна çирĕплетсе панă. Колхозниксен пĕрлехи пухăвĕ йышăннă тăрăх, сысна пăхакан Елена Гавриловăпа Денис Смирнов колхозника бригадир пулма уйăрнă. Вĕсене сысна пăхас ĕçрен хăтарман.

Фермăсенче выльăхсене уйрăм колхозниксем çумне çирĕплетсе панин тĕп пĕлтерĕшĕ çакăнта: вăл выльăх-чĕрлĕхе пăхса усрас ĕçри хуçасăрлăха пĕтерме, ĕçе сдельщина тăрăх организацилеме май парать, фермăсенче ĕçлекен работниксен ответлăхне ӳстерет, выльăх-чĕрлĕхе пăхса усрас ĕçри культурăлăха—зоотехникăпа

ветеринари науки вĕрентнине тăтăш хăпартса пыма, хушнă ĕçе лайăхрах вĕренсе çитме, выльăх-чĕрлĕхĕн уйрăмлăхĕсемпе йăлисене вĕренсе хăнăхма май парать.

Ферма работникĕсем хăйсен обязанноçĕсене пĕлни тата вĕсем çирĕп кун йĕрки тăрăх ĕçлени колхозра пысăк вырăн йышăнса тăрать. Унсăрăн ĕç дисциплинине çирĕплетме, ĕç кунĕпе тĕрĕс усă курассине йĕркелеме май çук. Малта пыракан фермăн опычĕ çакна уççăн кăтартса парать. Кунта ферма работникĕсен обязанноçĕсене çырса, курăнмалли вырăна çакнă, терĕмĕр. Унта фермăра ĕçлекен кашни çыннăн мĕнле ĕç тумалли палла. Сăмахран, сысна амисене пăхакан колхозницăсен обязанноçĕсем çаксем:

1. Çирĕплетсе панă сыснасене лайăх пăхмалла, нормăпа тăрантармалла, вăхăтра тата таса шывпа шăвармалла;

2. Апата сыснасене париччен лайăх хатĕрлемелле;

3. Сыснасене лайăх çанталăкра кашни кун уçăлтарса çуретмелле, вĕсене тасатмалла, вараланасран сыхламалла;

4. Кашни апат çитернĕ хыççăн валашкасене тасатса çумалла;

5. Сысна витине тата картишне таса тытмалла, станоксенче яланах типĕ те таса айсарăм пулмалла;

6. Ĕç хатĕрĕсене, халатсене, алăсене таса тытмалла;

7. Сысна амисене вăхăтра чуптарса хăвармалла, çурасене лайăх йышăнса илмелле, сывă пăхса ӳстермелле;

8. Зоотехникăпа ветеринари правилисене тăтăшах пурнăçа кĕртсе пымалла;

9. Выльăхсен сывлăхне кашни кунах астуса тăмалла; пĕр-пĕр сысна чирленине асăрхасан, ун çинчен çийĕнчех ферма заведующине е ветеринари работникне пĕлтермелле.

Çак ĕçсене тăваççĕ ĕнтĕ сысна амисене пăхакан колхозницăсем. Самăртма хупнă сыснасене пăхакан свинаркăсем сыснасене самăртас техникăна лайăх пĕлме, ăна тĕрĕс пурнăçа кĕртме тивĕç. Вĕсен сыснасем апата мĕнле çинине, вĕсем мĕнле ӳссе аталаннине асăрхамалла, апата начар çиекен тата ырхан сыснасене уйрăм ушкăна уйăрмалла, лайăхрах тăрантармалла. Кĕскен каласан, иккĕмĕш бригадири свинаркăсен тĕп обязанноçĕ — çирĕплетсе панă сыснасене лайăх самăртасси, пысăк пахалăхлă аш тата сало туса хатĕрлесси.

Е. Гавриловăпа Д. Смирнов бригадирсем свинаркăсен ĕçне тăтăшах тĕрĕслесе тăраççĕ, фермăра çирĕплетсе панă кун йĕрки тăрăх ĕçлессине тата зоотехникăпа ветеринари правилисене пурнăçа кĕртессине йĕркелесе пыраççĕ. Кашни свинаркăна выльăх апачĕ виçсе параççĕ. Свинаркăсемпе пĕрле кашни уйăхра сыснасене турттарса пăхаççĕ. Бригадирсем бригадăна çирĕплетсе панă выльăх-чĕрлĕхшĕн, çурт-йĕрсемпе ĕç хатĕрĕсемшĕн тата выльăх апачĕпе тĕрĕс усă курассишĕн ответлă. Вĕсем бригадăпа свинаркăсене паракан заданисене туса хатĕрлес ĕçе активлă хутшăнаççĕ, çав заданисене ирттерсе тултарассишĕн бригада членĕсем хушшинче социализмла ăмăрту организацилеççĕ.

Ферма заведующийĕ Иван Огурцов колхоз правленийĕ ертсе пынипе ĕçлет, фермăри мĕнпур ĕçсене пĕлсе йĕркелет. Вăл зоотехникăпа пĕрле бригадăсем валли производствăллă заданисем туса хатĕрлет. Заданисене колхозниксен пĕрлехи пухăвĕнче çирĕплетнĕ хыççăн, çав заданисене кашни бригада патне тата фермăра ĕçлекен кашни колхозник патне çитерет, вĕсене пурнăçлассине организацилет.

Ферма заведующийĕ колхозра выльăх апачĕ акса тумалли пуçă çаврăнăшĕсем тăвас, сыснасем валли симĕс конвейер организацилес тата кĕтӳ çӳретмелли вырăнсемпе тĕрĕс усă курассине йĕркелес ĕçсене те активлă хутшăнать. Вăл выльăх апачĕсемпе выльăхсем айне сармалли улăма акт тăрăх йышăнать, бригадăсене апата требовани тăрăх парать, бригадăсенче апата мĕнле расходланине тăтăшах тĕрĕслесе тăрать.

И. С. Огурцов тата çак ĕçсене тăвать: фермăра зоотехникăпа ветеринари правилисене нимĕн пăсмасăр пурнăçа кĕртесси çине нумай вăй хурать, учет ĕçне вăхăтра та тĕрĕс туса пырать, ферма работникĕсем хушшинче социализмла ăмăртса ĕçлессине тата зоотехникăна вĕренессине организацилет.

* * *

Ялхуçалăхне малалла вăйлатса пырас ĕçре колхоз ĕçне план тăрăх туса пыни пысăк вырăн йышăнса тăрать. Выльăх-чĕрлĕх фермисем те плансăр ĕçлеме пултараймаççĕ. Çавăнпа та колхозра çулсеренех кашни фермăна, унта ĕçлекен кашни колхознике выльăх-чĕрлĕх

йышне ӳстерме тата унăн тухăçлăхне хăпартма заданисем параççĕ.

Сысна фермине панă заданире çак ыйтусем уççăн палăрса тăраççĕ: фермăра сыснасем пурĕ мĕн чухлĕ, вăл шутра сысна амисемпе аçа-производительсем миçе пулмалла; сысна амисенчен миçе çура илсе ӳстермелле, вĕсен чĕрĕ виçи амăшĕсенчен уйăрнă чухне мĕн чухлĕ пулмалла; миçе сысна самăртмалла тата чĕрĕ виçепе мĕн чухлĕ аш-какай илмелле т. ыт. те.

Фермăра учет ĕçне лайăх йĕркеленĕ, ăна тĕрĕс тата вăхăтра туса пыраççĕ. Выльăх-чĕрлĕх йышĕ улшăнса пынине кунта „Ама выльăх-чĕрлĕх йышне учета илмелли кĕнеке“, „Çамрăк выльăх-чĕрлĕх ӳснине, выльăх-чĕрлĕхе кĕтӳре тата хупса самăртассине учета илмелли кĕнеке“ çине çырса хураççĕ. Фермăра çакăн пек актсем çыраççĕ: выльăх-чĕрлĕх çурални çинчен, çамрăк выльăх-чĕрлĕх ӳссе чĕрĕ виçине хушни тата самăртма тăратнă выльăх-чĕрлĕх самăртма пăрахнă тĕле чĕрĕ виçине хушни çинчен.

Фермăра выльăх апатне расходланине „Выльăх апатне расходланин ведомоçĕсем“ тăрăх шута илеççĕ. Колхозниксем ĕçлесе тунă ĕçкунĕсене „Фермăри ĕçкунĕсене учета илмелли ведомоçсем“ тăрăх шута илеççĕ. Кунта уйрăмах тин çуралнă çурасене учета илес тĕлĕшпе çирĕп йĕркене тунă. Сысна çури çуралсанах, ун çинчен учет кĕнеки çине çырса хураççĕ, акт çыраççĕ, акта çав кунах правление леçеççĕ. Тĕрĕс учет ферма ĕçне, унта ĕçлекен кашни колхозникăн ĕçне тĕплĕн пĕлсе тăма, ферма работникĕсем производство заданийĕсене мĕнле тултарса пынине тĕрĕслесе пыма, вĕсене ĕçшĕн тӳлессине тивĕçлипе йĕркелеме май парать.

Плансем туни тата заданисем пани ĕçĕн пуçламăшĕ кăна-ха. Плансемпе заданисем хут çинче кăна тăрса ан юлччăр тесе вĕсене пурнăçлассишĕн ывăнма пĕлмесĕр тăрăшмалла. Мĕншĕн тесен, заданисене пурнăçласси—чи хаклă тивĕç. Малта пыракан фермăра ĕçлекенсем хăйсене панă заданисене лайăх пĕлеççĕ, вĕсене чыслăн пурнăçлассишĕн куллен тăрăшаççĕ.

ВЫЛЬĂХ-ЧĔРЛĔХ ĂШĂ ВИТЕСЕНЧЕ

Колхозăн пĕчĕк юханшыв çывăхĕнче вырнаçнă сысна ферминче пĕр-пĕр комбинатри пекех. Мĕн çук-ши кунта! Пысăк та стандартлă витесем, выльăх апачĕн склачĕсем,

апатсене выльăха ĕитерес умĕн хатĕрлемелли кухня, фермăра ĕçлекенсем пурăнакан çурт, картишсем... Ăçта пынă унта тасалăх, тирпейлĕх.

Фермăра çурт-йĕрсене хĕле аван хатĕрлеççĕ, ветеринарипе санитари тата профилактика ĕçĕсене вăхăтра пурнăçласа пыраççĕ. Выльăх-чĕрлĕх кĕтӳре çӳренĕ вăхăтра сысна витисене лайăх тасатаççĕ, юсаса ăшăтаççĕ, дезинфекцилесе шуратаççĕ. Кун пек чухне вара тĕрлĕрен эмелсемпе (хлорлă изВеçĕн 10—12 процентлă шĕвекĕпе, халĕ кăна сӳнтернĕ изВеçĕн 20 процентлă шĕвекĕпе т. ыт. те) усă кураççĕ. Витесемпе ĕç хатĕрĕсене дезинфекцилес ĕçре уйрăмах кĕл тăррипе анлăн усă кураççĕ. Ăна çапла хатĕрлеççĕ: икĕ килограмм кĕле вунă литр шывра пĕр сехет хушши вĕретеççĕ, вĕресе тăракан кĕл тăррипе вара дезинфекци тăваççĕ.

Паллах ĕнтĕ, ветеринари ĕçĕнче витесене çулталăкра икĕ хутран кая мар (çуркунне выльăхсене кĕтĕве кăларсан тата кĕркунне вĕсене витере усрама тытăниччен) дезинфекцилесе шуратни пысăк вырăн йышăнать, вăл выльăх-чĕрлĕхе ерекен чир-чĕртен сыхлама май парать. Колхозри сысна ĕрчетекенсем çак ĕçе хăйсен вăйĕпе тăваççĕ.

Сыснасене усракан витесене кĕнĕ çĕре, алăк умне, атă-пушмака дезинфекци тумалли ещĕк лартнă. Çакă ĕнтĕ фермăна ерекен чирсем килсе кĕресрен сыхлама пулăшать. Çак тĕллевпех ферма территоринче сыхланмалли ытти ĕçсене те кирлĕ пек туса пыраççĕ. Ытти хуçалăхри выльăхсемпе кайăк-кĕшĕксене тата йытăсемпе кушаксене вара пачах кĕртмеççĕ. Çавнашкалах йĕкехӳресемпе тата шăшисемпе те кĕрешеççĕ.

Ăçта тасалăх — унта чир çук. Фермăра сыснасене ăшă та çутă, таса та типĕ витесенче усраççĕ. Кашни витере вентиляци лайăх ĕçлет, тислĕк шĕвекне юхтарса кăларма валаксем пур. Хĕллехи вăхăтра витесем умĕнчи юра тасатсах тăраççĕ, çавăнпа та алăксем лайăх уçăлса хупăнаççĕ. Çуркунне пулас умĕн çурт çумĕнчи юра тата çурт тавра тунă канавсене тасатаççĕ.

Ферма ĕçченĕсем сыснасене шăнса пăсăласран сыхлас тĕллевпех тата çак ĕçсене тăваççĕ: витере сыснасен айне таса та типĕ улăм сараççĕ, сарса панă улăма вăхăтра улăштараççĕ, тислĕке тăтăшах тасатса тăраççĕ. Сыснасене кашни кун уçăлтарса çӳретме картишне кăлараççĕ. Çав вăхăтра витери сывлăш та уçăлать.

Фермăра картишне те яланах таса тытаççĕ, тислĕкпе ытти тасамарлăха çийĕнчех пухса, тислĕк усрамалли вырăна кăлараççĕ. Ку анчах мар. Ĕçченсем фермăри ĕçĕн культурине пур майсемпе те ӳстерсе пыраççĕ. Сăмахран, халат тăхăнса ĕçлесси, ĕçе тытăниччен тата ăна вĕçлесен ата-пушмака, алăсене çуса тасатса дезинфекцилесси йăлана кĕнĕ. Çак „пĕчĕк“ ĕçсĕм те ĕнтĕ сыснасене чирлесрен сыхлама кирлĕ.

Фермăра пур ĕçсем те артель правленийĕ çирĕплетсе панă кун йĕрки тăрăх пурнăçланса пыраççĕ. Çав йĕркене сыснасем те хăнăхса çитнĕ. Хĕллехи вăхăтра сыснасене талăкра виçĕ хутран кая мар тăрантараççĕ, шăвараççĕ. Çурасене ĕмĕртекен амасене тăватă хут тăрантараççĕ. Фермăра ĕç ирхине ултă сехетре пуçланать, каçхине сакăр сехетре вĕçленет.

Сыснасене тăрантарас ĕçе фермăра лайăх организациленĕ. Вĕсене ятарласа тунă „столовайĕнче“ (пӳлĕмре) тăрантараççĕ. Апатсене хатĕрлеме фермăра кухня пур, вăл пысăк, унта кормозапарник вырнаçтарнă, хурансемпе ĕç хатĕрĕсем çителĕклĕ.

Рацион шутне тĕрлĕрĕн апатсем кĕреççĕ: клеверпа люцерна ути е çăнăхĕ, çĕрулми, силос, концентратлă апатсем (сĕлĕ çăнăхĕ, турантă т. ыт. те), кăшман, хĕрлĕ кишĕр, чĕкĕнтĕр, вĕлтрен, хăймине уйăрнă сĕт, минераллă апатсем, сăсăлсем.

Апатсене выльăха çитерес умĕн хатĕрлесси — ăна тутлăрах тăвасси, тата унăн ирĕлеслĕхне лайăхлатасси фермăра сысна пăхакансен кулленхи ĕç йăлине кĕнĕ ĕнтĕ. Вĕсем хытă апатсене вĕтетсе, çемçетсе тата концентратлă е урăх апатсемпе тутлăлантарса хатĕрлеççĕ. Сăмахран, сыснасене парас умĕн клевер е люцерна уттине çапла хатĕрлеççĕ: утта машинăпа вĕтетеççĕ, чана яраççĕ те ун çине вĕри шыв сапаççĕ, вунă сехет иртсен ăна чантан кăлараççĕ, утă питĕ лайăх çемçелет. Çапла майпа çемçетнĕ утта сыснасене пĕçернĕ çĕрулмипе, сĕлĕ çăнăхĕпе е сăсăлпа хутăштарса çитереççĕ. Çак апатпа пĕрле кашни сыснана 10 грамм апат тăварĕ тата 6 грамм трикальций-фосфат ятлă минераллă япала хушса параççĕ. Çапла хатĕрленĕ апата сыснасем юратса çиеççĕ.

Сыснасем утă çăнăхне те питĕ юратса çиеççĕ. Утă çăнăхне пăрça йышши çамрăк курăка чечеке лариччен, лайăх çанталăкра пухса кĕртнĕ утăран хатĕрлеççĕ.

Сыснасемшĕн утă ванчăкĕ лайăх апат шутланать. Утăран çавăн пекех тата утă шывĕ хатĕрлеççĕ. Ăна çапла тăваççĕ: малтан шывпа йĕпетнĕ утă çине вĕретнĕ шыва сивĕтсе е вĕрекен шыва яраççĕ. Пĕр килограмм утта йĕпетме 5—6 литр шыв кирлĕ пулать. 5—6 сехет иртсен, утă шывĕ хатĕр пулать. Ăна сыснасене ĕçтереççĕ е концентратлă апатсемпе пăтратса çитереççĕ.

Клеверпа люцернăн симĕс курăкне, викăпа сĕлĕ хутăшне тата силоса ытти апатсемпе хутăштарса панă чухне вĕтетеççĕ. Тымарçимĕççене çăваççĕ, тураççĕ. Çĕрулмине лайăх çуса тасатнă хыççăн пĕçереççĕ. Тĕштыра пĕрчисене пуринчен ытла çурса е авăртса хатĕрлеççĕ. Хăшпĕр чухне тĕштырра витаминсем ытларах пулма шăтараççĕ. Апата салатлас тата çĕпрепе йăçĕтес меслетсемпе те усă кураççĕ. Турăтăсене выльăхсене тăрантарас умĕн вĕтетеççĕ.

Çуллахи вăхăтра сыснасене кĕтӳре çӳретеççĕ. Вĕсене кĕтӳре çӳреме майĕпен, 5—6 кун хушшинче, хăнăхтараççĕ. Ку вăхăтра концентратлă апатсен хисепне кашни кунах чакарса пыраççĕ. Хăшпĕр чухне сыснасене, туранă курăкпа тăрантарса, кĕтĕве кăларас умĕн симĕс апат çиме хăнăхтараççĕ. Малтанхи кун сыснасене каç пулас умĕн 1—1,5 сехет хушши кĕтсе çӳреççĕ, иккĕмĕш кун кĕтӳре 2—2,5 сехет хушши çӳретеççĕ, виççĕмĕш кун—4 сехет таран, тăваттăмĕш кун—5 сехет, улттăмĕш кун—6—8 сехет хушши çӳретеççĕ.

Кĕтӳ çӳретмелли вырăнпа лайăхрах усă курас тесе, сыснасене уйрăм ушкăна уйăраççĕ. Аçасене амасенчен уйрăм кĕтеççĕ. Кĕтӳ çӳретмелли вырăна уйрăм участоксем туса валеçеççĕ. Кашни ушкăна уйрăм участок çинче çӳретеççĕ. Фермăра ĕçлекенсем сыснасене кĕтӳ çӳретмелли вырăна тата шăварма ерипен илсе каяççĕ, вĕсене хытă хăваламаççĕ, çапмаççĕ. Шăрăх вăхăтра сыснасене картасенче выртторaçççĕ. Кĕтӳрен таврăнсан, вĕсене станоксене вырнаçтараççĕ. Çуллахи вăхăтра сыснасене çăваççĕ е шыва кĕртеççĕ. Ку вăл сыснасен сывлăхне лайăхлатать тата вĕсен продуктивлăхне ӳстерет.

Халлĕхе колхозра сыснасене клевер е люцерна акнă участоксем çинче тата улăх-çарансем çинче кĕтӳре çӳретеççĕ. Çитес çывăх çулсенче çак ĕçе татах та лайăхрах организацилеççĕ. Колхоз сыснасем валли симĕс конвейер тăвать.

Тĕрĕс пăхса усранипе фермăри сыснасем хĕлле те, çулла та лайăх ӳтлĕ. Ама сыснасене тулли ӳтлĕ чухне чуптарса хăвараççĕ. Чуптарас умĕн сысна амисене уйрăмах лайăх тăрантараççĕ, концентратлă тата минераллă апатсем нумай пама тăрăшаççĕ. Чуптарасса вара икĕ сысна аçипе чуптараççĕ. Сысна аçисене-производительсене те лайăх пăхаççĕ. Çапла ĕçленипе колхозри сысна пăхакансем сысна амисем хĕсĕр юлассине пĕтернĕ. Кашни сысна ами çулталăкра икшер хут çурлать, пысăк та çирĕп çурасем туса парать. „Кудряшка", „Галка", „Пташка", „Болтавка", „Смычка", „Белянка" тата „Сутурка" ятлă сысна амисем кашни çурламассерен 12—14 çура туса параççĕ. Нумай çура тăвакан сысна амисем фермăра татах та пур.

Колхозри сысна ĕрчетес ĕç ăстисем пĕр ама айĕнче 14-шар çура е ытларах та ӳстерме вĕренсе çитрĕç ĕнтĕ.

ЧИ ОТВЕТЛĂ ТАПХĂР

Сысна ами вăтам шутпа виçĕ уйăх та виçĕ эрне тата виçĕ кун пĕтĕ çӳрет. Ку вăхăтра унăн хырăмĕнчи çурасемпе вĕсене витсе тăракан кипкисен йывăрăшĕ пăт çурăна—икĕ пăта çитет. Паллах ĕнтĕ, лайăх аталаннă çурасем илесси пĕтĕ амана тĕрĕс тăрантарса пăхса усранинчен нумай килет. Ахальтен мар, колхоз чысĕшĕн ырми-канми тăрăшакан ĕçченсем çак вăхăтра уйрăмах лайăх ĕçлеççĕ. Кун пирки ферма заведующийĕ Иван Огурцов акă мĕн каласа парать:

— Пирĕн сысна пăхакансем пĕтĕ амасене тăрантарас ĕçе тĕплĕн тăваççĕ. Сысна амисене талăкра виçĕ хут тĕрлĕрен апатпа тăрантараççĕ. Çав апатсенче белоксем, минераллă япаласем тата витаминсем çителĕклĕ. Сăмахран, пăрça йышши культурăсен (клевер, люцерна) утине е курăкне илер. Ку сыснасемшĕн питĕ паха апат пулса тăрать. Зоотехника вĕрентнĕ тăрăх унта белок, çавăн пекех хырăмри çурасене аталанма питех те кирлĕ япаласем—кальци тата каротин (провитамин А) нумай. Тымарçимĕçсем, силос тата пахча çимĕçсем лайăх апат шутланаççĕ. Çĕрулмипе концентратсем рациона тĕп вырăн йышăнаççĕ.

Пĕтĕ вăхăтра сыснасем апата аван çиеççĕ, лайăх хатĕрленĕ апата вара татах та килĕштереççĕ. Çавăнпа та пирĕн сысна пăхакансем выльăха парас умĕн апата

тăрăшса хатĕрлеççĕ. Сăмахран, пĕçернĕ çĕрулмине концентратсемпе е пăспа çемçетнĕ утă çăнăхĕпе хутăштарса çитереççĕ. Пĕтĕ амасен рационне обязательнăй йĕркепех пурă, шăмă çăнăхĕ тата апат тăварĕ кĕртеççĕ.

Наука пире çапла вĕрентет: амăшĕн ăшĕнчи çурасем юлашки уйăхсенче ытларах ӳсеççĕ, çавна май пĕтĕ амана тутлăхлă япаласем нумайрах кирлĕ пулаççĕ. Çакна асра тытса, тăваттăмĕш уйăх пĕтĕ çӳрекен сыснасене эпир лайăхрах тăрантаратпăр. Ку вăхăтра рационти концентратсен нормине ӳстеретпĕр. Кунсăр пуçне, кашни амана 2—3 литр хăймине уйăрнă сĕт хушса паратпăр. Çав вăхăтрах хытă тата сĕтеклĕ апатсен хисепне чакаратпăр, силоса рационтан пачах кăларатпăр. Çăвăрласси ик-виçĕ кун кăна юлсан, апата икĕ хут сахалтарах, шĕвĕ нимĕр туса паратпăр.

Сысна амисене çурлама хатĕрленĕ чухне тĕрĕс тăрантарни кăна çителĕксĕр. Вĕсене усракан витере ялăнах ăшă, типĕ те таса пултăр. Пĕтĕ амасене лайăх çанталăкра кашни кун кăларса уçăлтарса çӳретес пулать. Çулла, сыснасем пурте кĕтӳре чухне, амасене инçете илсе çӳретсе ывăнтармалла мар. Вĕсене уйрăм ушкăна уйăрса, сысна вити çывăхĕнчи участок çинче кĕтмелле. Пĕтĕ çӳренĕ вăхăтăн юлашки эрнисенче кашни амана уйрăммăн кăларса çӳретмелле, çурлас умĕн пилĕк кун хушши ăна тула кăларма юрамасть.

Эпир пĕтĕ амасене вĕсем вăхăтсăр çăвăрласран тата тĕрлĕ инкек-синкекрен хытă сыхлатпăр. Вĕсене витерен кăларнă тата тăрантарнă чухне пĕр-пĕрне хĕстерсе амантасран хытă асăрхатпăр. Сыснасем вăхăтсăр çăвăрласси татах та чылай сăлтавсенчен пулма пултарать. Палăртнă вăхăтра апат памасан, сысна час-часах малти урисемпе станок стени çине улăхса тăрать, çавна пула çура пăрахать. Кунашкал ан пултăр тесе, пĕтĕ амасене тăрантармалли вăхăта питĕ çирĕп асăрхаса пыратпăр. Вĕсене çĕрнĕ, кăвакарнă, шăннă апатсем, çуса тасатман тымарçимĕçсем нихçан та памастпăр. Пĕтĕ сыснасене вăхăтсăр çăвăрласран сыхлас тĕллевпех тата çак ĕçсене тăватпăр: хĕллехи вăхăтра вĕсене уçăлса çӳреме тула кăлариччен шăваратпăр. Шăвармасан вĕсем юр хыпма пултараççĕ. Малтанхи вăхăтра, пĕтĕ çӳренĕ тапхăрăн пĕрремĕшпе иккĕмĕш уйăхĕсенче, пĕр станокра (пӳлĕмре) икĕ ама усратпăр, унтан кашни амана уйрăм станока куçаратпăр.

— Пĕтĕ амана тĕрĕс тăрантарса пăхса усрани хырăмри çурасене лайăх аталанма май парать. Ку ĕнтĕ— пысăк ĕç,—тет малалла Иван Семенович.—Анчах та çурасене йышăнса илесси тата вĕсене малтанхи куншенче пăхса усрасси пирĕн ĕçре чи ответлă тапхăр шутланать. Çавăнпа та эпир çамрăк çурасене йышăнса илме тĕплĕн хатĕрленетпĕр, ку тĕлĕшпе кирлĕ ĕçсене пурне те вăхăтра туса ирттеретпĕр. Пĕтĕ амана, çурлас умĕн пĕр эрне малтан, дезинфекцилесе шуратнă станока куçаратпăр. Унта яланах сысна айне сарма таса улăм пур. Çав вăхăтра амана шăнса пăсăласран, витĕр вĕрекеи çил тивесрен хытă сыхлатпăр, мĕншĕн тесен ама ку вăхăтра çилли шыçнипе çăмăллăнах чирлеме пултарать.

Çапла ĕçленипе эпир сысна амисем хĕсĕр юлассине пĕтернĕ. Кашни сысна ами çултадăкра икшер хут çурлать, пысăк та çирĕп çурасем туса парать.

Çурлас умĕн сысна ами хăйне хăй урăхла тыткалама пуçлать. Вăл пĕрре выртать, тепре тăрать, улăма çăвара çыртса пĕр вырăнтан тепĕр вырăна куçарать. Çăвăрличчен пĕр талăк малтан унăн чĕччине пӳрнепе пуссанах тапратнă сĕт тухать. Колхозри сысна пăхакансем çак паллăсене лайăх пĕлеççĕ. Вĕсем çурлама вăхăт çитнĕ сыснасене талăкĕпех асăрхаса тăраççĕ, çамрăк çурасене лайăх йышăнса илме тата вĕсене пурне те упраса хăварма тăрăшаççĕ.

Пĕррехинче пире фермăра чи лайăх ĕçлекен Елена Гаврилова „Галка“ ятлă амана мĕнле пулăшу панине курма тиврĕ. Çак колхозница, сысна çурлама тытăнас умĕн, шурă халат тăхăнчĕ, хăйĕн аллисене таса шывпа, супăньпе çурĕ, унтан алшăллипе шăлса типĕтрĕ.

Сысна çурлама пуçларĕ. Малтанхи çура çуралсанах, сысна пăхакан унăн сăмсине, çăварне тата хăлхисене таса алшăллипе лăймакаран шăлса тасатрĕ, унтан çуран пĕтĕм кĕлеткине шăлса типĕтрĕ. Кăвапа тымарне хачăпа, çура хырăмĕ çумне çичĕ сантиметр хăварса, касса татрĕ. Пӳрнесемпе пăчăртанă кăвапа вĕçне иод сĕрчĕ. Çурана карçинкка ăшне ячĕ, карçинккана çиелтен чăптапа витрĕ.

Юлашки çура хыççăн хыçĕ тухрĕ. Çакă вăл сысна çурласа пĕтернине кăтартрĕ. Вăхăт пĕр сехет ытларах кăна иртрĕ, „Галка“ вуникĕ çура çурларĕ. Çурасем шултра та таса. Елена Гаврилова вĕсене пурне те лайăх йышăнса илчĕ.

— Пĕр çулхине фермăра çакăн пек пулчĕ,—каласа парать сысна пăхакан,—ама йĕркеллех çурларĕ, анчах пĕр çуран пурнăç паллисем те çук: сывлани те палăрмасть. Мĕн тăвас? Хăраса ӳкрĕмĕр хамăр. Чи малтанах çуран сăмсине тата çăварне лăйăмакаран тасатрăмăр, çурана искусственнăй майпа сывлаттартăмăр, шăлса типĕтрĕмĕр те амăшĕ патне ярса ĕмĕртрĕмĕр.

Ялан хастар колхозница кашни ĕçех питĕ тĕплĕ турĕ. Сысна çурласа пĕтерсен, станока тата сысна амине тасатса йĕркелерĕ. Сыснан кайри пайне, аяккисене, çиллине ăшă шывпа çурĕ те лайăх шăлса типĕтрĕ. Вараланнă улăма пухса илчĕ, сысна айне типĕ улăм сарчĕ. Унтан çурасене ĕмĕртме тытăнчĕ.

Çурасене ĕмĕртесси пĕчĕк ĕç пек туйăнать, анчах та вăл питĕ ответлă та кăткăс ĕç иккен. Елена Гаврилова кашни çурана чĕчĕ патне хăй илсе пычĕ, вĕсене икĕ рет вырнаçтарса тухрĕ. Ку анчах мар. Вăл сысна çурисене амăшĕ патне ĕмĕртме янă чухне тата çапла турĕ: пĕчĕкрех çурасене—малти, сĕтлĕрех чĕчĕсем патне, вăйлă, шултра çурасене—кайри чĕчĕсем патне ячĕ. Ама мĕнле ĕмĕртнине тата çурасем мĕнле ĕмнине асăрхаса тăчĕ. Акă, пĕр шухă çура вырăнтан вырăна куçма тытăнчĕ, сысна пăхакан ăна, çирĕплетсе пана чĕчĕ патне илсе пырса, тытса тăрса ĕмĕртрĕ.

— Малашне çурасене кашни сехет иртмессерен амăшĕ патне ярса ĕмĕртетĕп,—тет Елена Гаврилова.— Виçĕ-тăватă кунтан сысна çурисем хăйсен вырăнне хăнăхса çитеççĕ те кашни хăй чĕччине ĕмеççĕ.

Фермăра çурасене çуралнă хыççăнах турттарса пăхаççĕ, вĕсен чĕрĕ виçине „Книга опоросов и приплода“ текен кĕнеке çине çыраççĕ. Кунсăр пуçне çурасем çурални çинчен акт çыраççĕ, ăна çав кунах колхоз правленине леçсе параççĕ. Эпир фермăра пулнă кун та çапла турĕç: ферма заведующипе свинарка „Галка“ сысна амин çурисене тĕрĕс шута илчĕç, вĕсене вăхăтра виçсе пăхрĕç. Чылай çурасен чĕрĕ виçи 1 000—1 100 грамм тайрĕ.

Çапла йышăнса илеççĕ фермăра çамрăк çурасене. Çак ĕçе пĕтĕм ферма коллективĕ активлă хутшăнать, кашни ĕçе тĕплĕ тăвать, çурасене куç шăрçине сыхланă пек сыхлать. Çакна пула çурасем сывă та тĕреклĕ ӳсеççĕ. Пĕчĕкрех çурасем амăшĕсенчен уйăриччен ыттисене хуса çитеççĕ.

Малтанхи икĕ уйăх хушши çурасем пуринчен ытла амăш сĕчĕпе тăранса пурăнаççĕ. Çавăнпа та ферма ĕçченĕсем, чĕчĕ ĕмекен çурасене сывă та хăвăрт ӳстерме тăрăшнă хушăрах, сысна амине те лайăх пăхса усрама тата тĕрĕс тăрантарма тăрăшаççĕ.

— Эсир çура ĕмĕртекен амасене мĕнле пăхса ӳсратăр?—тесе ыйтсан, Варвара Андреева свинарка çапла каласа парать:

— Çурасене малтанхи хут ĕмĕртнĕ хыççăн, сысна амине таса та ăшă шывпа шăваратăп, 5—6 сехет иртсен, сăсăлпа е сĕлĕ çăнăхĕпе пăтратнă шĕвĕ апат паратăп. Çавăн пек шĕвĕ апата малтанхи кун 3—4 хут паратăп. Çурланă хыççăн иккĕмĕш кунтан пуçласа, сысна амине паракан апат нормине майĕпе ӳстерсе пырса, концентратсемпе пĕрле çуса тасатнă кăшман, клевер е люцерна ути, çулла—ешĕл курăк хушса тăрантаратăп. Пиллĕкмĕш кунне сысна амине тулли нормăпа тăрантарма пуçлатăп.

Зоотехника курсĕнче вĕреннине аса илем-ха. Унта пире зоотехник çапла вĕрентрĕ: выльăхсен сĕт пахалăхĕ пĕр пек мар, сăмахран, ĕне сĕтĕнче вăтамран çу 3,5 процент, белок 4 процент шутланать, сысна сĕтĕнче çу 4,5 процент, белок 7 процент. Паллах, сĕтри белок тин çуралнă çурасене аталантарма питĕ усăллă. Çавăнпа та эпир çура ĕмĕртекен амасене нумай белоклă тата сĕт антаракан апатсемпе тăрантаратпăр. Ун пек апатсем сахал мар. Клевер, люцерна тата викăпа сĕлĕ хутăшĕн утинче белок нумай. Кишĕр, кăшман, çĕрулми, силос—сĕт антаракан апатсем. Концентратлă апатсем: сăсăл, сĕлĕ е пăрça çăнăхĕ. Хăймине уйăрнă сĕт—питех те паха апат. Ăна эпир кашни амана талăкра 2—3 литр ĕçтеретпĕр. Минераллă апатсене уйрăм валашка çине хурса паратпăр.

— Ĕмĕртекен амасене апата яланах палăртнă сехетсанче, талăкра 4—5 хут паратăп,—тет сысна пăхакан.— Апата шĕвĕрех туса пама тăрăшатăп, мĕншĕн тесен сĕт тума сыснана шыв нумай кирлĕ. Кашни апатлантарнă хыççăн амана шăваратăп. Эпĕ тата çакна каласшăн: хытă кăшкăрсан е çапсан сысна пăшăрханать, тепĕр чухне сĕт антармасть.

...Наука тĕпчесе пĕлнĕ тăрăх, сысна çурине пĕр

килограмм хушăнма амăш сĕчĕ виçĕ литр кирлĕ. Çавăнпа та сысна сĕтлĕ пулни питех те паха. Апла пулин те, сысна амин сĕт çителĕклĕ пулсан та, чĕчĕ ĕмекен çурасене çамрăклах тĕрлĕ апат çиме вĕрентни пысăк вырăн йышăнать. Çакна асра тытса, колхозри свинаркăсем ултă куна çитнĕ çурасем валли лутра валашка çине пурă, йывăç кăмрăкĕ тата хĕрлĕ тăм хурса параççĕ. Паллах ĕнтĕ, минералла япаласем çамрăк çурасене аталанма питех те кирлĕ. Кăмрăк хырăмлăхпа пыршăсенчи ытлашши газсене тата шĕвексене сăхса илет, апата лайăхрах ирĕлтерме пулăшать. Хĕрлĕ тăм организма тимĕр парать тата анеми чирĕпе чирлесрен сыхлать.

Çак вăхăтран пуçласах свинаркăсем çурасене вĕретнĕ шыв, имшерккерех çурасене ĕне сĕчĕ ĕçтерме пуçлаççĕ. Шыва уйрăм валашка çине ярса параççĕ, талăкра 5—6 хут улăштараççĕ. Ăшă сĕте 10—15 минутлăха лартса параççĕ, унтан валашкана, сĕте ĕçсе ярайман пулсан та, каялла илеççĕ.

Вунă кунхи çурасене тулă, пăрça, сĕлĕ ăшаласа параççĕ. Ăна çапла хатĕрлеççĕ: тырра тимĕр листисем çине çухе сий сарса, плита çине лартаççĕ, вара ăна пăтраштарса, хăмăр тĕслĕ пуличчен ăшалаççĕ. Ăшаланă тырă апат ирĕлтерекен органсене вăйлăрах ĕçлеме, чăмлакан мускулсене вăйлатма, шăлсене çирĕплетме пулăшать, сысна çурине варвиттирен сыхлать. Малта пыракан фермăн опычĕ те çакна çирĕплетсе парать.

— Пирĕн сысна пăхакансем çурасене кĕсел те, пăтă та пĕçерсе параççĕ,—тет ферма заведующийĕ Иван Семенович.—Кĕселе питĕ ăста хатĕрлеççĕ вĕсем. Аланă сĕлĕ çăнăхне малтан ислентереççĕ, 40 градуса яхăн ăшă шыва ярса лăкаççĕ. Пĕр килограмм сĕлĕ çăнăхĕ çине 8—10 литр шыв яраççĕ. Кĕсел хуранта сехете яхăн вĕрет. Çавăн пек кĕселе виçĕ эрнери çурасене кунне виçшер хут, хăймине уйăрнă сĕтпе хутăш çитереççĕ. Пăтта шултра авăртнă е çурнă тырăран пĕçерсе хатĕрлеççĕ. Пĕр килограмм çурнă тырра пĕçерме пĕр литр шыв е хăймине уйăрнă сĕт илеççĕ.

Колхоз çулсеренех сепаратор пунктĕнчен хăймине уйăрнă сĕт, тăпăрч шывĕ нумай илет. Çавăнпа та фермăра çурасене хăймине уйăрнă сĕт ытлăн-çитлĕн ĕçтереççĕ, тăпăрч шывне пур сыснасене те параççĕ. 1951 çулта колхоз сепаратор пунктĕнчен хăймине уйăрнă сĕт 35 пин литр, 1952 çулта—64 пин литр илнĕ.

Çурасем асăннă апатсене çиме хăнăхса çитсен, свинаркăсем вĕсене çитерекен апат çине клевер ути çулçисем (ванчăкĕсем) хушса пама, витаминлă симĕс клевер утин шывне ĕçтерме пуçлаççĕ, уйăх çитсен, çĕрулми яшки, кишĕр, кăшман тата силос çитерме тытăнаççĕ. Çуллахи вăхăтра тин çеç çулнă куракă (клевер, вĕлтрен т. ыт. те) çителĕклĕ параççĕ. Ĕмĕртекен амасене çурисемпе пĕрле, ытти сысна кĕтĕвĕсенчен уйрăм, ферма сывăхĕнче кĕтсе çӳреççĕ.

Сысна çурисене кашни кунах, çанталăк лайăх тăнă чухне, уçăлтарса çӳретме кăлараççĕ. Малтан вĕсене витерен ещĕкпе илсе тухаççĕ, каярахпа амăшĕпе пĕрле тулта çӳретеççĕ. Майĕпен хăнăхтарса пырса, виçĕ эрнери çурасене пĕр сехет хушши тулта çӳретеççĕ. Кунсăр пуçне, фермăра çурасене кашни кунах тасатаççĕ. Çуллахи вăхăтра вĕсене икĕ эрнере пĕр хут ăшă шывпа, супăньпе çăваççĕ. Çурасене уçăлтарса çӳретни, шыва кĕртни вĕсен организмне тĕрекленме тата аталанма нумай пулăшать.

Çурасене чир-чĕртен сыхласси—питĕ кирлĕ те пысăк ĕç. Ферма ĕçченĕсем çакăншăн нумай тăрăшаççĕ, çавăнпа та вĕсем çамрăк çурасене тĕрĕс-тĕкел пăхса ӳстереççĕ. Юлашки икĕ çул хушшинче фермăра, çитĕннĕ сыснасем кăна мар, пĕр çура та чирлемен, вилмен. Ку ĕнтĕ—питех те паха çитĕнӳ.

Тăрăшсан, кашни колхоз ферминче сысна çурисене пĕр çухатусăр пăхса ӳстерме пулать. Малта пыракан фермăн опычĕ çакна кăтартса парать: çурасене чир-чĕртен сыхлăс тесен, фермăра пуринчен ытла тасалăхшăн, типтерлĕхшĕн кĕрешни кирлĕ. Çурасене уйрăмах шăнса пăсăласран хытă сыхлас пулать, унсăрăн вĕсен ӳпки шыçма, ревматизм чирĕ пуçланма пултарать. Витере санитари тĕлĕшĕнчен акă мĕн тумалла: çурасене апат пани хыççăн кашнинчех тислĕке тасатса кăлармалла, айне сарнă улăма кунне виçĕ хут улăштармалла. Çурасем айне типĕ пăчкă кĕрпи сармалла, вара витере нӳрлĕх пулмасть. Сыснасене апат пани хыççăн савăтсапана вĕри шывпа çуса, çулла хĕвел çинче, хĕлле уçă сывлăшра типĕтес пулать.

Çамрăк ӳт-пĕве аталанма витаминсемпе минералла япаласем çитмесен, сысна çурисем мĕн лекнĕ çавна çиеççĕ (ая сарнă улăма, пылчăклă урай хăмине кăшлаççĕ, тула кăларсан, çăвар тулли тăпра хыпса чăмлаççĕ,

таса мар шĕвеке ĕçеççĕ). Ун пек чухне вара çурасем рахит, витаминоз, варвитти чирĕсемпе чирлеме пултараççĕ. Çавăнпа та сысна ĕрчетес тĕлĕшпе малта пыракансем çурасене тĕрĕс тăрантарас ĕç çине яланах тимĕр пăхаççĕ.

Фермăра сысна амисен тата ĕмекен çурасен сывлăхне асăрхасах тăраççĕ. Вĕсен вар-хырăмĕ пăсăлни палăрсанах, апат пахалăхне тата унăн тасалăхне тĕрĕслеççĕ. Ĕмĕртекен амасене нихçан та кăвакарнă е шăннă апатсем, çĕрнĕ çĕрулмипе тымарçимĕçсем памаççĕ. Силоса çурланă хыççăн вунă кун иртсен тин пама тытăнаççĕ, ăна шăтăкран е траншейăран кăларсанах çитереççĕ. Çура ĕмĕртекен аман çиллине яланах таса тытаççĕ, тĕрлĕрен чир-чĕртен хытă сыхланаççĕ. Çак ĕçсем пурте çурасен сывлăхне упрама, уйрăмах вĕсене варвитти чирĕнчен сыхлама пулăшаççĕ.

— Çапла ĕçлетпĕр эпир,—каласа парать ферма заведующийĕ Иван Огурцов.—Лайăх тăрантарса пăхса ӳстернĕ икĕ уйăхри çурасен чĕрĕ виçи пĕлтĕр вăтам шутпа 12 килограмм пулнă, хăшпĕр çурасем—13—15 килограмм таран тайнă. Икĕ уйăха çитнĕ çурасене 4—5 кун хушшинче амăшĕсенчен уйăратпăр. Пĕрремĕш кунта вĕсене амăшĕ патне 3—4 хут, тепĕр кунне 2—3 хут, виççĕмĕш кунне—пĕр хут ярса ĕмĕртетпĕр. Уйăрнă çурасене амăшĕ пурăннă станокрах хăваратпăр, амăшне урăх станока куçаратпăр. Ăратлăх валли чи лайăх амасенчен пулнă çурасене кăна, пуринчен ытла çуркунне çуралнисене хăваратпăр. Ăратлăх хăварма юрăхсăр аçасене, 6—7 эрне çитсен, кастаратпăр.

Çавăн пек ĕçленипе ферма ĕçченĕсем хăйсен колхозĕ валли сывă та пысăк продуктивлă сыснасем çитĕнтереççĕ. 1951 çулта вĕсем кашни амаран—13-шер çура, 1952 çулта—18-шар çура, 1953 çулхи тăхăр уйăх хушшинче—18-шар çура илсе ӳстернĕ, пурĕ 1121 çура çитĕнтернĕ. Фермăри сыснасен йышĕ ӳссех пырать. Фермăра çитĕнтернĕ çурасен пĕр пайне колхозниксене сутнă. Халĕ кашни колхозник хăйĕн хуçалăхĕнче сысна усрать.

Колхозри ферма работникĕсем тунă ӳсĕмсемпе çырлахмаççĕ. Вĕсем кашни сысна аминчен вăтам шутпа 25-шер çура илсе ӳстерессишĕн кĕрешеççĕ.

Икĕ çул каярах колхозра çапла пулнă: сысна çурисене амăшĕсенчен уйăричченех сутма тăрăшнă, сутлăх ашпа сало сахал тунă. Виçĕ тăватă эрнери сысна çурисене пысăк хакпа сутсан та, колхоз сахал тупăш илнĕ, ферма ĕçне вара кашни сысна аминчен миçе çура илни тăрăх çеç хакланă. Халĕ çав çитменлĕхе татăклăнах пĕтернĕ. Юлашки çулсенче артель 853 пуç сысна самăртнă.

Колхоз сыснасене хупса самăртас ĕçе анлăн туса пыма 1951 çулта тытăннă. Ун чухне акмалли çĕрĕн кашни 100 гектарĕ пуçне 8 сысна самăртнă, 6 центнер сысна ашĕ илнĕ. 1952 çулта колхоз ферминче ĕçлекенсем çĕнĕ çитĕнӳ тăвассишĕн çине тăрсах кĕрешнĕ. Вĕсем пурĕ 338 сысна самăртнă, акмалли çĕрĕн кашни 100 гектарĕ пуçне 12 центнер сысна ашĕ илнĕ. Сыснасене хупса самăртмалли задание пилĕк хут ирттерсе тултарнă.

Сысна фермин таварлă тухăçĕ 1953 çулта тата нумай ӳсрĕ. Тăхăр уйăх хушшинче 371 сысна самăртнă, вĕсен чĕрĕ виçи пурĕ 29 тонна ытла пулнă. Уйăхла каласан, акмалли çĕрĕн кашни 100 гектарĕ пуçне 22 сысна çитĕнтернĕ, 17 центнер сысна ашĕ илнĕ. Сыснасене хупса самăртмалли çулталăкри плана çур çултах ăнăçлăн пурнăçланă. 1953 çулхи октябрĕн 1-мĕшĕ тĕлне тепĕр 272 çамрăк сыснана самăртма тăратнă.

Çапла ĕнтĕ, колхоз ферминчи сыснасен аш-какай тухăçлăхĕ икĕ çул та тăхăр уйăх хушшинче виçĕ хута яхăн ӳснĕ.

— Сыснасен аш-какай тухăçлăхĕ ӳссе пыни вăл обществăлла хуçалăха аталантарма колхозра вĕçĕмсĕр пысăк резервсем пуррине, вĕсене тупса ĕçре усă курас тĕлĕшпе эпир малашне тата пысăк ăсталăхпа ĕçлемеллине кăтартса парать,—тет ферма заведующийĕ Иван Огурцов.

Колхозра сыснасене самăртас ĕçе мĕнле йĕркеленĕха? Самăртма чи малтан хĕлле тата çуркунне ир çăвăрланă сысна çурисене хăвараççĕ. Мĕншĕн тесен, çуркунне çăвăрланă çурасем çулла кĕтӳре ешĕл апатпа лайăх усă кураççĕ, хăвăрт та аван аталанаççĕ, çакна пула вĕсене самăртма концентратлă хаклă апатсем расходласси тата самăртмалли вăхăт чакать, вĕсенчен илекен продукци хакĕ чылай йӳнелет.

Анчах сыснасене самӑртас ӗҫе çулталӑк тӑршшӗпех туса пыни хуçалӑхшӑн ытларах усӑллӑ. Çапла туни сысна пӑхакансен ӗçне пӗр пек йӗркелеме, государствӑна пама тата пасарта сутма çулталӑкӗпех аш-какай хатӗрлеме май парать. Колхоз кассине те укçа-тенкӗ яланах кӗрсе тӑрать. Çавӑнпа та колхозра çуркунне çуралнӑ çурасене кӑна мар, ытти вӑхӑтра çуралнисене те нумай самӑртаççӗ.

Самӑртма ялан тенӗ пекех 3—4 уйӑха çитнӗ, лайӑх аталаннӑ, çирӗп сывлӑхлӑ çамрӑк сыснасене уйӑрса илеççӗ. Ку вӑхӑтра вӗсем тӗрлӗ апатсем çиме хӑнӑхаççӗ. Самӑртма хӑварнӑ çамрӑк выльӑхсене виççе пӑхаççӗ; миçе уйӑхрине, йывӑрӑшне тата мӑнтӑрлӑхне кура вӗсене тӗрлӗ ушкӑна уйӑраççӗ, 6—8 сыснаран пӗр ушкӑн тӑваççӗ. Çамрӑк ама сыснасене çамрӑк аçа сыснасенчен уйӑраççӗ. Канӑççӑр тата çапӑçма юратакан çурасенчен уйрӑм ушкӑн тӑваççӗ.

— Пирӗн опыт çакна кӑтартса парать: сыснасене тӗрӗс тӑрантармалла, унсӑрӑн вӗсенчен пысӑк тупӑш илме хӗн,—тет бригадир Денис Захарович.—Çавӑнпа та эпир сыснасене зоотехника вӗрентнӗ пек, рацион тӑрӑх тӑрантарса усратпӑр. Рационсене зоотехникпа пӗрле тӑватпӑр, рацион тунӑ чухне апатра организма кирлӗ белоклӑ, минераллӑ япаласем тата витаминсем мӗн чухлӗ пулмаллине шута илетпӗр.

Вологда облаçӗнчи Междуреченски районӗнчи „Буденновец“ колхозри сысна фермин заведующийӗ Социализмла Ӗç Геройӗ А. Е. Люскова çапла калать: самӑртма хатӗрленӗ вӑхӑтра çамрӑк сыснасен организмне тата вӗсен апат ирӗлтерекен органӗсене аталантарма тӑрӑшмалла. Çамрӑклах мӑнтӑрлатсан, сыснасем апат начар çиеççӗ, вӗсем начар ӳсеççӗ.

Сысна ӗрчетес ӗçре чапа тухнӑ мастерӑн паха опычӗпе Денис Захарович анлӑн усӑ курать. Вӑл самӑртмалли вӑхӑтӑн малтанхи тапхӑрӗнче çамрӑк сыснасене питӗ лайӑх ӳстерекен, белок нумай тытакан апатсемпе тӑрантарать, минераллӑ апатсем парать. Рациона çак апатсене кӗртнӗ: çур килограмм сӗлӗ çӑнӑхӗ, çавӑн чухлех турантӑ, виçӗ килограмм пӗçернӗ çӗрулми, пӗр килограмм силос, пӗр литр хӑймине уйӑрса илнӗ сӗт, çур килограмм клевер ути, вунӑ грамм пурӑ, çичӗ грамм апат тӑварӗ, вунӑ грамм шӑмӑ çӑнӑхӗ. Çуллахи вӑхӑтра рацион тутлӑхӗн тӑватӑ пайӗнчен пӗр пайне симӗс апат

йышăнать. Курăк вăл—чи йӳнĕ апат. Унта, çĕрулмипе танлаштарсан, белокпа минералла япаласем чылай. Кунсăр пуçне, унта витаминсем те нумай, вĕсем çамрăк сыснана хăвăрт ӳсме пулăшаççĕ.

Çамрăк сыснасене ӳстерсе аталантарас тапхăр вĕсем 6—7 уйăха çитиччен пырать. Иккĕмĕш тапхăрта сыснасене лайăх какай паракан тата çу хушакан апатсемпе тăрантараççĕ. Самăртнă чухне çĕрулмипе, тымарçимĕçпе, силоспа, витаминла утă çăнăхĕпе, клевер курăкĕпе, вĕлтреппе те усă кураççĕ. Концентратсемпе минералла апатсем çителĕклĕ таран параççĕ.

Çакна палăртмалла: фермăра сыснасене самăртнă чухне пуринчен ытларах çĕрулмипе анлăн усă кураççĕ. Паллах, çĕрулми выльăх-чĕрлĕхе, уйрăмах сыснасене, çитĕнтермелли питĕ паха апат пулса тăрать. Д. Н. Прянишников академик кăтартса панă тăрăх, сыснасене 10 пăт çĕрулми çитернĕ хыççăн пĕр пăт какай хушăнать. Гектартан 15 тонна çĕрулми туса илсен, рацион тăрăх çĕрулмипе пĕрле кăштах тырă хушса çитерсен, çавăн чухлĕ çĕрулмипе 90 пăта яхăн сысна какайĕ илме пулать.

Фермăра самăртма хупнă сыснасене талăкра çакăн чухлĕ çĕрулми параççĕ:

Миçе уйăхри сысна	Сыснан чĕрĕ виçи (килогрампа)	Çĕрулми хисепĕ (килогрампа)
5—6	70—80	6
7—8	90—110	7
8—9	120—130	8
9—10	140—150	10
10—12	160—170	12

— Пирĕн ĕçре выльăх апачĕпе лайăх усă курма пĕлни кирлĕ,—тет бригадир.—Ку тĕлĕшпе эпир пуян опыт пухрăмăр. Выльăх апачĕпе тĕрĕс усă куратпăр, самăртнă чухне кашни сыснана апат ытларах çитерме тăрăшатпăр. Фермăри ĕçсене тумалли кун йĕркине эпир пĕр пăсмасăр пурнăçа кĕртсе пыратпăр. Сысnасем те çав йĕркене хăнăхса çитнĕ: лăпкăрах тăраççĕ, апата лайăх çиеççĕ, вăхăтра канаççĕ. Сăмах пуçланă май, сысnасене тăрантарас йĕркене илер. Апата яланах палăртнă вăхăтра тата пĕчĕккĕн паратпăр. Çапла туни ытларах усă кӳрет. Ун пек чухне сысна апата пĕр хăвармасăр, лайăх çиет. Тата çакăн пек пулать: выльăха пĕр-пĕр

апат килĕшмест, анчах çав апата лайăх хатĕрлесе парсан, вăл ăна пĕтĕмпех çисе ярать. Çавăнпа та эпир сыснасене парас умĕн апата лайăх хатĕрлетпĕр. Пĕр пек апат выльăха та йăлăхтарать. Çакна шута илсе, рационсене вунă кунта пĕрре улăштарса тăратпăр. Сыснасене урăх апат çиме ерипен, темиçе кун хушшинче хăнăхтаратпăр. Вĕсене шыв вăхăтра ĕçтеретпĕр.

— Самăртмалли вăхăтăн юлашки кунĕсенче,—каласа парать малалла Денис Захарович,—выльăхсем апата начартарах çиме пуçласçĕ, вара вĕсене хытă апатсемпе çĕрулми тата тымарçимĕçсем сахалтарах, концентратсем ытларах паратпăр. Кунне 3—4 хут вырăнне 5—6 хут тăрантаратпăр. Çак тапхăрта сыснасем апата лайăх çиччĕр тесе, апат çине кăштах тăвар хушса паратпăр.

Тăварлă сĕлле фермăра çапла хатĕрлеççĕ: витрене е каткана 5—6 сантиметр хулăнăш сĕлĕ яраççĕ, унта кашни 7 килограмм сĕлĕ пуçне 1 килограмм тăвар ярса лайăх пăтраштараççĕ. Тĕштырăсен тата тăварăн пĕрремĕш сийĕ çине тĕштырăсен иккĕмĕш сийне хураççĕ те каллех, малтанхи пекех, ун çине тăвар сапаççĕ. Витрене е каткана çапла майпа тăвар сапнă тĕштырăсем тултарсассăн, тырă çине çиеле çитичченех ăшă шыв яраççĕ. Тепĕр 10—12 сехетрен тырă шĕвет, тăварлă шывпа исленет. Çакăн пек тăварлă сĕлле кашни сыснана кунне 200—300 грамм параççĕ. Ăна панă чухне сыснасене вăхăтра шăварассине асăрхасах тăраççĕ.

Пуçарулла тата пултарулла бригадир выльăх апачĕсене сыснасене çитерес умĕн хатĕрлес ĕçе те аван йĕркеленĕ. Ун çинчен эпир маларах тĕплĕн каласа панăччĕ.

Д. З. Смирнов сыснасене кĕтӳре çӳретсе самăртас ĕçе питех те мала хурать.

Самăртакан сыснасене кунта клевер е викăпа сĕлĕ хутăшĕ акнă участоксем çинче кунне 6—7 сехетрен кая мар çӳретеççĕ. Кĕтӳ çӳретмелли вырăнти симĕс апат самăртакан сыснасем валли çителĕклĕ мар пулсан, вĕсене клевер çулса çитереççĕ, концентратсем хушса параççĕ.

Самăртма хупнă сыснасене усракан витере яланах таса, типтерлĕ пулмалла. Выльăхсем айне сарса панă улăма вăхăтра улăштараççĕ. Витери тислĕке кунне виçĕ хут тасатса кăлараççĕ. Сыснасене кашни кун 1,5—2 сехет хушши картишĕнче уçăлтарса çӳретеççĕ. Самăртмалли тапхăрăн юлашки кунĕсенче вĕсене уçăлтарса çӳретес вăхăта 5—10 минута çити чакараççĕ.

Çапла ĕçленипе Денис Захаровичпа унăн юлташĕсем пысăк çитĕнӳсем тăваççĕ, çулсеренех колхоза çĕршер пуç сысна самăртса параççĕ. Колхоз государствăна лайăх самăртнă сыснасем кăна парать. 1951 çулта хатĕрлев пунктне 44 пуç сысна леçнĕ, вĕсен кашнин чĕрĕ виçи вăтам шутпа 87 килограмм пулнă. 1952 çулта артель государствăна татах та шултра, самăр сыснасем панă, кашни сысна 90 килограмран кая мар тайнă. Аш-какай памалли плана ытларах сыснасен шучĕпе тултарни ытти фермăсенчи выльăх-чĕрлĕх йышне хăвăртрах ӳстерсе пыма май парать. Паллах ĕнтĕ, лайăх самăртнă сысна пĕр ĕне е вунă сурăх йывăрăш туртать. Юлашки виçĕ çул хушшинче колхозра майракалла шултра выльăхсен хисепĕ икĕ хут ытла ӳснĕ.

ФЕРМА ПЫСĂК ТУПĂШ ПАРАТЬ

— Пирĕн обществăлла хуçалăхра хальхи вăхăтра сысна ферми чи пысăк тупăшлă отрасль пулса тăчĕ,— тет колхоз бухгалтерĕ Захар Макарович. Вăл хăйĕн сăмахĕсене нумай цифрăсемпе çирĕплетсе пачĕ.

Сысна ĕрчетекен ферма колхоза çултан-çул ытларах та ытларах тупăш парать:

(Тупăш илнĕ тенкĕпе)

Çулсем	Мĕн пурĕ	кашни сысна ами пуçне	кашни 100 гектар çĕр пуçне
1951	88.347	1.600	5.200
1952	260.396	4.270	15 320
1953 октябрĕн 1-мĕшĕ тĕлне . .	320.506	5.169	19.853

Çак таблицăран ĕнтĕ фермăран илекен тупăш икĕ çул хушшинче виçĕ хут ытла ӳснине, колхозниксем кашни гектар çĕрпе тĕрĕс усă курассишĕн тимлĕн тăрăшнине курма пулать.

Обществăлла выльăх-чĕрлĕхрен илекен укçа-тенкĕпе колхоз çĕнĕ витесем туса лартать, тĕрлĕрен ялхуçалăх машинисемпе минерал удобренисем туянать, фермăсенчи йывăр ĕçсене механизацилет. 1952 çулта колхозри строительсем лаша вити—тăваттă, сысна вити—иккĕ, пăру, сурăх, кайăк-кĕшĕк витисем, кормокухня—тăваттă, омшаник, ферма работникĕсем валли пурăнмалли виçĕ пӳрт тунă. Артель строительство валли, ĕç вăйне шутламасăр, 129 пин тенкĕ укçа уйăрса хунă.

Выльăх-чĕрлĕх валли çĕнĕ витесем тата ытти çурт-йĕрсем тăвас ĕç колхозра пĕр кун хушши те чарăнса тăмасть. Ку ĕçе пурĕ 58 колхозник хутшăнать. 1953 çулта строительствăна 143 пин тенкĕ укçа хывнă, платниксем лашасемпе ĕнесем, сурăхсемпе сыснасем валли тăватă çĕнĕ вите, икĕ кормокухня, пилĕк автомашина вырнаçмалăх гараж тата ферма работникĕсем валли виçĕ çурт туса лартнă.

Обществăлла хуçалăх аталаннă, унăн отраслĕсен таврарлă тухăçĕ ӳснĕ май колхозниксен материальнăй пурнăçĕпе культури те лайăхланать. 1952 çулта кашни ĕçкунĕ пуçне 2 килограмм та 250 грамм тырă, 3 килограмм выльăх апачĕ тата 80 пус укçа валеçнĕ. 1953 çулта артель членĕсем кашни ĕçкунĕ пуçне 3,5 килограмм тырă, 2-шер килограмм çĕрулми илнĕ. Кунсăр пуçне кашни ĕçкунĕ пуçне икшер тенкĕ укçа валеççе панă. Тырпул тухăçне, обществăлла выльăх-чĕрлĕх йышне тата тухăçлăхне ӳстермелли плансене ирттерсе тултарнăшăн нумай колхозниксем, ĕçкунĕ çумне хушса тӳлемелли йĕрке тăрăх, тырă тата выльăх-чĕрлĕх продукчĕсем чылай илеççĕ.

СССР Министрĕсен Совечĕ йышăннă постановлени фермăсенче ĕçлекен колхозниксене ĕçшĕн вĕсем мĕн чухлĕ сĕт суса илнине, мĕн чухлĕ çăм касса илнине, миçе çамрăк выльăх хутшăнтарнине тата вĕсене пăхса ӳстернине, ĕç выльăхĕсемпе аш-какай валли усракан выльăх-чĕрлĕхĕн чĕрĕ виçи мĕнле ӳссе пынине тата вĕсен самăрлăхне кура тӳлеме сĕнет. Выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçе хăвăрттăн аталантарса пырассишĕн тăрăшакан колхозра нумай çул хушши çапла тăваççĕ те ĕнтĕ. Ферма работникĕсене, правительство постановленийĕпе килĕштерсе, колхозниксен пĕрлехи пухăвĕ йышăннă хаксем тăрăх ĕçкунĕсем çырса параççĕ.

Сысна пăхакансене кунта ĕçкунĕсене çапла шутласа параççĕ: амăшĕнчен уйăриччен сывă пăхса ӳстернĕ, 12 килограмран кая мар туртакан кашни çурашăн—4 ĕçкунĕ, 12 килограмран сахалтарах туртакан кашни çурашăн—3 ĕçкунĕ; самăртма хупнă сыснасен тата амăшĕнчен уйăрнă сысна çурисен чĕрĕ виçи ӳснĕшĕн кашни 10 килограмм пуçне пĕр ĕçкунĕ; кашни самăр сысна аçишĕн тата ăна лайăх пăхса усранăшăн уйăхне 3 ĕçкунĕ çырса параççĕ.

Колхозра çакăн пек çирĕп йĕрке тунă: выльăх-чĕр-

лĕхе кашни уйăх вĕçĕнче коммисси пăхса тухать, вăл выльăхсен сывлăхĕпе самăрлăхне тата кашни колхозникăн ĕç результатне палăртать, тĕрĕслени çинчен акт çырать. Çав акт çине комисси членĕсем—колхоз председателĕ, ревизи комиссийĕн председателĕ, ферма заведующийĕ, колхозри ветеринари работникĕ тата зоотехник алă пусаççĕ. Çак акт конюхсемпе ферма работникĕсене ĕçкунĕсем çырса памалли тĕп документ пулса тăрать.

Сысна ферминче ĕçлекенсем пурте, ытти ферма çыннисем пекех, выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçе вăйлатассишĕн ырми-канми тăрăшаççĕ, пысăк тупăш илеççĕ. Е. Гаврилова сысна пăхакан 1953 çулта 535 ĕçкунĕ тунă, ĕçкунĕсем тăрăх вăл 117 пăт тырă, 67 пăт çĕрулми, 1070 тенкĕ укçа, выльăх апачĕ чылай илнĕ.

Колхоз фермисенче ĕçшĕн тӳлессине сдельщина тăрăх организацилени обществăлла интереса харпăр хăй интересĕпе тĕрĕс çыхăнтарма май пачĕ, ферма работникĕсене тухăçлăрах ĕçлеме мобилизацилерĕ. Акă пĕрикĕ тĕслĕх. Сысна ĕрчетекен фермăра 1951 çулта пĕр центнер сысна ашĕ туса илме 46 ĕçкунĕ тăкаклана пулсан, 1952 çулта вара 27 ĕçкунĕ çеç расходлана. Акă тата колхозăн сысна ĕрчетес ĕçре расходлана кашни ĕçкунĕ пуçне фермăран илекен тупăш мĕнле ӳснине илер. Икĕ çул хушшинче çав тупăш 15 тенкĕрен 45 тенке çити, урăхла каласан, виçĕ хут ӳснĕ. Çак цифрăсенчен ĕнтĕ колхозниксем пысăк тухăçлăхпа ĕçленине, вĕсен ĕçри хастарлăхĕ ӳссе пынине куратпăр.

Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕн Центральнăй Комитечĕпе Совет правительстви 1953 çулта йышăннă постановленисем тăрăх, çĕршывра выльăх-чĕрлĕх продукчĕсем хатĕрлемелли тата сутăн илмелли хаксене чылай ӳстернĕ, колхозниксен, рабочисен тата служащисен хуçалăхĕсем государствăна обязательнăй йĕркепе выльăх-чĕрлĕх продукчĕсем памалли нормăсене чакарнă. Кунпа пĕрлех колхозсене выльăх тата выльăх-чĕрлĕх продукчĕсем сутнипе пухăнакан укçа-тенкĕрен колхозниксене аванс шучĕпе 25 процента яхăн валеççе пама сĕннĕ. Выльăхсен йышĕпе тухăçлăхне ӳстернĕшĕн хушса тӳлемелли йĕркене те çирĕппĕн пурнăçласа пыма хушнă.

Партипе правительство колхозсемпе совхозсенче йышлă та пысăк тухăçлă выльăх-чĕрлĕх ĕрчетме, çавăн

пекех колхозниксен, рабочисемпе служащисен килĕсенче ĕнесемпе ытти выльăхсем усрама лайăх условисем туса пачĕç. Ку, паллах, колхозсен тупăшне нумайлатма тата фермăсенчи работниксен ĕçлес интереснe ӳстерме пулăшать.

— Выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçе татах та вăйлатса пырассишĕн, пирĕн пурнăçа тата та лайăхлатассишĕн партипе правительство кулленех тимлĕн тăрăшаççĕ. Пирĕншĕн çакăн пек тăрăшнăшăн Тăван çĕршыва сĕтçу, аш-какай тата ытти выльăх-чĕрлĕх продукчĕсем ытларах хатĕрлесе парассишĕн савăнса ĕçлес килет,— теççĕ колхоз фермисенче ĕçлекен колхозниксемпе колхозницăсем.

ЫРĂ ТĔЛЛЕВ

Колхоз фермисенче социализмла ăмăртăва тивĕçлипе пуçарса пыраççĕ. 1953 çулта республикăри выльăх-чĕрлĕх ĕрчетекенсем хушшинче пыракан социализмла ăмăртăва колхоз фермисенче ĕçлекен колхозниксемпе колхозницăсем пурте хутшăннă, пысăк обязательствăсем илнĕ. Сысна ферминче ĕçлекенсем кашни сысна аминчен 20 çураран кая мар илсе ӳстерме, сыснасене самăртас ĕçе анлăрах туса пыма, фермăн çулталăкри укçа тенкĕ тупăшне 300 пин тенкĕрен ирттерме сăмах панă. Хăйсем çине илнĕ обязательствăна вĕсем чыслăн пурнăçлаççĕ. Пĕр-пĕринпе ăмăртса ĕçленисĕр пуçне, колхозри ферма работникĕсем районти „Красное Сормово", Энгельс ячĕпе тăракан, „Свобода" тата „Сталинец" ялхуçалăх артелĕсенчи выльăх-чĕрлĕх ĕрчетекенсемпе ăмăртса ĕçлеççĕ, ăмăртура малта пыраççĕ.

Сталин ячĕпе тăракан колхозăн ферми чăннипех районта сысна ĕрчетекен чи лайăх ферма шутланать. Ферма çулсеренех районти ялхуçалăх выставкине хутшăнать, унта нумай çуралнă сысна амисене тата 12—15-шер пăт таякан сыснасене илсе тухса кăтартать. Районти организацисем ферма работникĕсен çитĕнĕвĕсене пысăка хурса хаклаççĕ, вĕсене кашни выставкăрах преми параççĕ. 1952 çулта ферма заведующийĕ И. Огурцовпа Д. Смирнов бригадира кашнине пустав панă, Е. Гавриловăпа В. Андреева сысна пăхакансене кĕпелĕх материал парса премиленĕ.

Колхозăн нумай енлĕ хуçалăхĕпе паллашма, выльăх-

чĕрлĕх фермисене курма кунта час-часах хамăр районти тата Ишлей, Сĕнтĕр тата ытти районсенчи колхозсенчен хăнасем килеççĕ. Хăнасем колхозăн пысăк тухăç паракан ăратлă выльăхĕсене курсан тĕлĕнеççĕ. Колхозри уй-хир ĕçченĕсем, выльăх-чĕрлĕх ĕрчетекен мастерсем хăйсен ĕç опычĕ çинчен экскурсантсене тĕплĕн каласа параççĕ. Колхоз районта малта пыракан артельсенчен пĕри. Экскурсантсем ахальтен мар çапла калаççĕ: „Сталин ячĕпе тăракан колхозра пулса пуян опыт туянтăмăр", теççĕ.

Колхоз фермисен паянхи пурнăçĕ ырă та илемлĕ. Çĕнĕ витесем тунă, пур çуртсенче те электричество çути йăлтăртатать, ĕçре машинăсен сасси янăрать. Фермăсен малашлăхĕ тата та чаплă. Халĕ ĕнтĕ колхозниксем, пĕр иккĕленмесĕрех, электричество вăйĕпе ĕнесем сăвасси, сурăх çăмĕ касасси, выльăх апачĕ хатĕрлесси, выльăхсене наука вĕрентнĕ пек усрасси çинчен калаçаççĕ.

Коммунистсен партийĕн Центральнăй Комитечĕн сентябрьти Пленумĕ йышăннă историлле решенийĕ ялхуçалăх ĕçченĕсене хамăрăн Тăван çĕршыва чечекленте-ressишĕн тата колхоз стройне тĕреклетессишĕн татах та хастарлăрах ĕçлеме хавхалантарчĕ. Сталин ячĕпе тăракан колхозри сысна ĕрчетес ĕç ăстисем, ытти пин-пин выльăх пăхакансем пекех, паян ĕнерхинчен тухăçлăрах ĕçлеççĕ, ырăн татах та лайăхрах ĕçлеме пулаççĕ. Вĕсем çĕнĕ ĕмĕтсемпе пурăнаççĕ.

— Эпир кашни сысна аминчен 25 çура илсе ӳстерессишĕн, „Республикăри чи лайăх свиновод" ятне илессишĕн кĕрешетпĕр,—теççĕ сысна пăхакансем.

— Тепĕр ик-виçĕ çултан эпир сухалакан çĕрсен кашни 100 гектарĕ пуçне 30 центнертан ытла сысна ашĕ туса илетпĕр,—тесе сăмах параççĕ сыснасене самăртас тĕлĕшпе ĕçлекенсем.

— Эпир Мускавра уçăлакан Пĕтĕм Союзри ялхуçалăх выставкин участникĕ пуласшăн,—тет сысна фермин заведующийĕ Иван Семенович Огурцов.—Çавăнпа та малашне татах та лайăхрах ĕçлес килет. Пирĕн ĕмĕт—Вологда облаçĕнчи „Буденновец" колхозри Социализмла Ĕç Геройĕ, Сталинла преми лауреачĕ А. Е. Люскова тата ытти палла сысна пăхакансем пек ĕçлесси, çĕнĕ те пысăк çитĕнӳсем тăвасси.

Ырă тĕллев. Колхозри сысна ĕрчетес ĕç мастерĕсем хăйсен сăмахне яланах ĕçпе çирĕплетеççĕ. Нимĕн иккĕ-

ленмелли те çук, малашне те çавăн пек пулать. Мĕншĕн тесен колхозра обществăлла выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçе вăйлатассишĕн кашни колхозник тăрăшать.

КОЛХОЗĂН ПЕРСПЕКТИВЛĂ ПЛАНĔ

КПСС Центральнăй Комитечĕн сентябрьти Пленумĕ „СССР ялхуçалăхне малалла аталантармалли мерăсем çинчен“ йышăннă постановление сӳтсе явнă хыççăн, Сталин ячĕпе тăракан колхоз членĕсем хăйсем çине конкретлă обязательствăсем илчĕç. Колхоз производствин пур отраслĕсене вăйлăн аталантарма пысăк резервсемпе çăлкуççем пуррине шута илсе, артель правленийĕпе парторганизаци, активпа пĕрле, колхозăн обществăлла хуçалăхне 1954—1955 çулсенче аталантармалли перспективлă план туса хатĕрленĕ, ăна колхозниксен пĕрлехи пухăвĕ сӳтсе явнă, пĕр шухăш-кăмăллă пулса çирĕплетнĕ.

Перспективлă план тăрăх, колхоз производствин пур отраслĕсене те хăватлăн аталантарма палăртнă. 1955 çулта пĕтĕм акмалли çĕр лаптăкĕ çинчен вăтам шутпа кашни гектартан 18-шар центнертан кая мар тĕштирĕ туса илмелле. Çак задачăна пурнăçлас шутпа колхозăн нумай ĕççем тумалла: 1954 çулта 10 уйлă пусă çаврăнашне пĕтĕмĕшпех пурнăçа кĕртсе çитермелле. Çавăнпа пĕрлех хире вырăнти тата минералла удобренисем нумай кăлармалла. Тăпран сухалакан сийне çулсеренех ӳстерсе пымалла. 1954 çулта тăпран сухаламалли сийне 23 сантиметртан ирттермелле. Планра ирхи тата кĕрхи çĕртме сухисене туса хăварас, хирсене çумкурăксенчен тасатас, хăмăла сухалас, сортлă вăрлăхсем акас тата ытти агротехника мероприятийĕсене те пысăк вырăна хунă. Тухăçлă тырпул туса илес ĕçре машина-трактор станцийĕн ку чухнехи çĕнĕ техникипе анлăн усă курма палăртнă. Икĕ çул хушшинче техникăлла культурăсен тухăçĕ те чылай ӳсет.

План тăрăх 1955 çулта çĕрулми лартмалли лаптăка 84 гектара çити ӳстерме палăртнă. Акмалли çĕр лаптăкне пысăклатнипе пĕрлех, çĕрулми тухăçлăхне ӳстерсе, кашни гектартан 185 центнер пуçтарса кĕмелле. Çапла вара 1955 çулта 15 пин центнер ытла çĕрулми туса илмелле. Çакăн чухлĕ çĕрулми государствăна пама та, выльăхсене тăрантарса усрама та, ĕçкунĕсем тăрăх валеçме те çителĕклĕ пулать.

Хисепĕ енчен илсе пăхсан, колхоз 1953 çултах обществăлла выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес тĕлĕшпе колхозсем умне лартнă задачăна пурнăçланă. Анчах та ку вĕсене нихăш енчен те тивĕçтерме пултараймасть. Çавăнпа та колхозниксем выльăхсен шутне малалла нумайлатса пынипе пĕрлех, вĕсенчен илекен тупăша татăкланах ӳстерме палăртнă. 1955 çулта сăвакан ĕнесен шутне 150 пуçа çитермелле, кашни ĕнерен вăтам шутпа 2.200 литртан кая мар, пĕтĕмпе 330 пин литр сĕт суса илмелле.

Колхозра сысна ĕрчетесси татах та анлăн сарăлса пымалла. 1954 çулта сысна амисем 75 пуç пулмалла, малалли çулта вара 85 пуçа çитмелле. Кашни сысна аминчен 19-шар çура илмелле. Пĕтĕмпе колхоз 1955 çулта 1.615 çура илмелле. Вăл шутран 450 пуç сысна самăртса государствăна сутмалла. Çапла вара сысна ĕрчетнинчен 400 пин тенкĕ тупăш илмелле.

Сурăхсемпе кайăк-кĕшĕк йышне те чылай ӳстермелле.

Артель хуçалăхне малалла аталантарас тĕлĕшпе туса ирттермелли ĕçсен планĕнче выльăх апачĕ хатĕрлессине пĕтĕмпех çĕнĕлле йĕркелеме палăртнă.

Колхозăн выльăх-чĕрлĕх валли 1955 çулта 9.500 центнер утă, 500 тонна силос, 10 пин центнер çĕрулми, 4.500 центнер тĕштырă, 2.000 центнер çуртри улăмĕсем, выльăх-чĕрлĕх айне сарса пама 4.000 центнер улăм уйăрса памалла. Çакă вăл обществăлла выльăх-чĕрлĕхе мĕн чухлĕ апат-çимĕç кирлине пĕтĕмпех тивĕçтерет.

Çуллахи вăхăтра выльăх-чĕрлĕхе кĕтӳ кĕтсе çӳреме, ятарласа хăварнă вырăнсем—100 гектар, вĕтлĕх вырăнсем—250 гектар уйăрса памалла. 1954 çулта çак вырăнсене тасатса тата минералла удобренисемпе çĕнетсе тĕпренех лайăхлатмалла. Çуркунне ĕнесене тата сысна-сене люцерна акса хăварнă вырăнсенче çӳретмелле.

* * *

Сталин ячĕпе тăракан колхоз членĕсем хăйсен пурнăçне аванлатас тĕлĕшпе партипе правительство тăрăшнине питĕ лайăх пĕлеççĕ. Вĕсем парти лартнă задачăна чи кĕске срокра пурнăçлассишĕн ывăнма пĕлмесĕр ĕçлеме тупа тăваççĕ.

ЧУВАШСКАЯ
КНИЖНАЯ ПАЛАТА
г. Чебоксары Чувашской АССР

Цена 45 коп.

Е. А. АНДРЕЕВ и М. О. ОСИПОВ

ПЕРЕДОВАЯ СВИНОФЕРМА

на чувашском языке

ЧУВАШГОСИЗДАТ
Чебоксары — 1954